Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

КПСС Чăваш обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тата Министрсен Совечĕн органĕ

Орган Чувашского обкома КПСС, Верховного Совета и Совета Министров Чувашской АССР

№ 14 (20147) • Юнкун, 1990 çулхи январĕн 17-мĕшĕ • Хаçат 1918 çулхи февральтенпе тухать • Хакĕ 3 пус

КПСС Центральнăй Комитечĕн Россия бюровĕнче

Январĕн 15-мĕшĕнче КПСС Центральнăй Комитечĕн Россия бюровĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ку бюрона КПСС Центральнăй Комитечĕн 1989 çулхи декабрьти Пленумĕнче йĕркеленĕ. Ларăва М. С. Горбачев председатель пулса ертсе пынă. Хăйĕн задачисемпе — КПСС политикине реализацилеме РСФСРти облаçсенчи тата крайсенчи парти организацийĕсен ĕçĕ-хĕлне координацилемелли, парти съезчĕсен тата конференцийĕсен, КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕсемпе Политбюровĕн решенийĕсене мĕнле пурнăçласа пынине контроллесе тăмалли задачăсемпе килĕшӳллĕн, Россия бюровĕ республикăри парти организацийĕн ĕçĕ-хĕлĕнчи хăшпĕр çивĕч ыйтусене пăхса тухнă. Ларăва КПСС крайкомĕсемпе обкомĕсен пĕрремĕш секретарĕсенчен чылайăшĕ хутшăннă.

Влаçăн республикăри тата вырăнти органĕсенче суйлав иртерме хатĕрленнĕ май КПСС Центральнăй Комитечĕн Россия бюровĕ Совет Российинчи халăхсене Чĕнсе калании текстне сӳтсе явса ырланă. Унта халăхсен туслăхне, Совет Союзĕн пĕрлехи семйине çирĕплетес ĕçре РСФСР ролĕ пысăк пулнине палăртнă, çĕнетӳ çитес çулсенчех палăрмалла улшăнусем патăр тесе, ăна тăтăклăн пурнăçа кĕртсе пыма чĕнсе калани пур. Чĕнсе калании текстне хаçатсенче пичетлĕççĕ.

Центральнăй Комитет бюровĕ Российăн экономика суверенитечĕн концепцине пăхса тухнă. Пĕр-пĕрин шухăшĕсемпе паллашнă хыççăн Российăн вăйлă экономики çĕршывăн федераци тытăмне политикăпа экономикăн çĕнĕ содержанийĕпе çирĕплетес ĕçре питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă. Республикăн экономика аталанăвĕн никĕсĕнче регионсем хушшинчи хуçалăх хутшăнăвĕсене тата социаллă пурнăçа çĕнетсĕ улăштарнине ертсе пымалли ĕçе пахалăх тĕлĕшĕнчен çĕнĕ шая çĕклеме пултаракан çул-йĕр пулмалла. Çак çул-йĕре туса хатĕрлессине хăвăртлатма кирлине палăртнă. Çавах кунта çав çул-йĕре палăртма наука организацийĕсене, автономиллĕ республикăсемпе крайсен, облаçсен руководителĕсене хутшăнтарасси, тĕп положенисене союзри органсемпе пĕрле çĕршывăн социаллă пурнăçпа экономикине аталантармалли мерăсемпе тачă çыхăнтарса хатĕрлесси çинчен пырать.

Бюро ларăвĕнче РСФСРта халăх депутачĕсен республикăри тата вырăнти Совечĕсен суйлавне хатĕрленесси мĕнле пынине сӳтсе явнă. Çакна палăртнă: халăх депутачĕсене суйлас тĕлешпе иртерекен кампани ытларах çĕрте суйлавçăсем пысăк активлăх кăтартнипе, суйлав умĕнхи кĕрешӳ çивĕч пынипе уйрăлса тăрать, альтернативлă никĕс çинче сасăлав иртермешкĕн условисем туса парать.

Вăтамран пĕр мандат пуçне РСФСРта халăх депутатне суйлама сакăр кандидат, автономиллĕ республикăсенче виçĕ кандидат тăран тăратнă. Вырăнти Советсен депутачĕсене суйламашкăн пĕр миллион та икĕçĕр пин кандидат тăратнă. Çакă вăл мандатсен хисепĕнчен 1,5 хут нумайрах.

Центральнăй Комитет бюровĕ парти крайкомĕсемпе бюровĕсене кандидата тăратнин итогĕсене тĕплĕн тишкерме, суйлав умĕнхи кĕрешӳвĕн малашнехи тактикине тĕрĕс палăртма сĕннĕ. Депутата суйлама тăратнă кандидатсен составĕнчен Советсенче активлă тата конструктивлă ĕçлеме пултаракан кандидатсене çĕнтермешкĕн майсем туса парас задача тăрать. Рабочисемпе хресченсенчен, хĕрарăмсемпе çамрăксенчен тăратнă кандидатсене пулăшу парасси çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла.

Парти комитечĕсен политика ĕçенче политика реформине пурнăçа кĕртес тата Советсене тулли власть парас ĕçре суйлав пĕлтерĕшне, республикăри ĕççыннисен 1990 çулта пурнăçламалли ответлă задачисене ăнлантарса парасси çине тимлĕ пăхмалла.

Ларура Россия Федерацийĕнчи парти организацийĕн ĕçĕ-хĕлĕн ытти хăшпĕр ыйтăвĕсене пăхса тухнă.

СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн
УКАЗĔ

СССР Верховнăй Советне пухасси çинчен

СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ **çапла йышăнать:**

Социализмлă Совет Республикисен Союзĕн Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессине 1990 çулхи февралĕн 14-мĕшĕнче Мускав хулинче пухас.

СССР Верховнăй Совечĕн
Председателĕ
М. ГОРБАЧЕВ.

Мускав, Кремль.
1990 çулхи январĕн 16-мĕшĕ.

Президиум ларăвĕ

Январĕн 15-мĕшĕнче Кремльте СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ăна СССР Верховнăй Совечĕн Председателĕ М. С. Горбачев председатель пулса ертсе пынă.

Ларура Сартлă Карабах автономи облаçĕнче тата хăшпĕр ытти районсенче чрезвычайлă лару-тăру туса хурасси çинчен ыйту пăхса тухнă. СССР шалти ĕçсен министрĕ В. В. Бакатин, СССР Генеральнăй прокурорĕ А. Я. Сухарев, СССР Государство хăрушсăрлăх комитечĕн председателĕ В. А. Крючков, Азербайджан ССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Председателĕ Э. М. Кафарова, Армян ССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Председателĕ Г. М. Восканян тухса каласнă. Ыйтăва сӳтсе явма Р. А. Базарова, В. С. Шевченко, М. Р. Сагдиев, В. Е. Курташин, В. Г. Кучеренко, Ю. Н. Бородин, Г. С. Таразевич, Ч. Айтматов, А. И. Лукьянов, Н. И. Рыжков юлташсем хутшăннă.

Сӳтсе явнă ыйтусем тăрăх СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ «Сартлă Карабах автономи облаçĕнче тата ытти хăшпĕр районсенче чрезвычайлă лару-тăру туса хурасси çинчен» Указ йышăннă. Унăн текстне хаçатсенче пичетленет.

ТĂВАНСЕН ĂМĂРТĂВĔ

МАРИ, МОРДВА, ЧĂВАШ АССРĕсем, ГОРЬКИЯ ТАТА ЯРОСЛАВЛЬ ОБЛАÇĔСЕМ 1989 ÇУЛТА СОЦИАЛИЗМЛА ĂМĂРТСА ĔÇЛЕНИН ИТОГĔСЕМ

	Мари АССРĕ	Мордва АССРĕ	Чăваш АССРĕ	Горький облаçĕ	Ярославль облаçĕ
ПРОМЫШЛЕННОСТЬ					
Договор обязательствисене пурнăçланă (отчетлă тапхăр планĕнчен — процентпа)	97,1	98,9	99,4	99,1	99,1
Продукци калăпăшĕ (ăçсем, пулăшу ĕçĕсем, 1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа)	104,6	103,5	104,9	99,8	101,3
Халăха кирлĕ таварсем туса кăларнă (эрех-сăра сутнине шутламасăр, отчетлă тапхăр планĕнчен шутласа — процентпа)	107,6	106,2	105,6	104,7	104,1
1988 çулхипе танлаштарсан	110,5	109,7	110,1	109,5	108,6
Халăха кирлĕ апат-çимĕçлĕх мар тавар туса кăларнă (РСФСР çăмăл промышленность тата пир-авăр промышленноçĕн министерствисен предприятийĕсен таварне шутламасăр, 1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа)	102,6	109,7	118,9	114,1	113,5
Ĕç тухăçлăхĕ (1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа)	106,8	106,2	105,5	103,4	104,6
ЯЛХУÇАЛĂХĔ					
Мĕнпур йышши выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк ашĕ туса илнĕ (1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа)	105	108	105	102	99,6
Пĕтĕмпе сĕт суса илнĕ (1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа)	106	105	103	101	101
Çулталăкра кашни ĕнерен сĕт суса илнĕ — килогрампа	3477	2767	2914	2930	2219
Пĕтĕмпе çăмарта туса илнĕ (1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа)	98	98	96	101	101
[illegible] выльăх-чĕрлĕх продукцийĕсем туса илнĕ (çăмарта — тăштырă акакан кашни 100 гектар çĕр пуçне):					
аш-какай — центнерпа	119	70	129,7	82	69,7
сĕт — центнерпа	384	272	384,5	387	381,4
çăмарта — пин штук	66,4	32	70,3	93	151,3
çăм — килогрампа	43	54	50	—	—
Хуçалăхсен мĕнпур категорийĕсенче выльăх-чĕрлĕх продукцийĕсем туянмалли плана тултарнă (çулталăк планĕнчен шутласа — процентпа):					
аш-какай	113	100,7	100	108	105
сĕт	116	102	104	108	98
çăмарта	102	107	102	107	105
çăм (таса çăм çине куçарсан)	132	104	109	103	129

• *Çивĕч сигнал*

МĔНЕХ ВĂЛ— ШТРАФ ТӲЛЕНИ?

Çапла шухăшлама хăнăхнă пулас вагон пушатас-тиес ĕçе ниçпле те кирлĕ пек йĕркелеме пултарайман предприятисемпе организацисен руководителĕсем. Ахăртнех, çулталăк бюджетĕнче чугун çула штраф тӳлемелли укçа-тенке те çителĕклĕх палăртса хурасçĕ пуле.

Чăваш АССР Статистика управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, 1989 çулхи декабрьте чугун çул станцийĕсенче, предприятисемпе организацисенче çĕршер вагона палăртнă вăхăтра пушатман е тиемен. «Чувашавтодор» пĕрлешӳ вагонсене нормативран икĕ хут, «Чувашагропромстрой» пĕрлешӳ 1,4 хут ытлашши тытнă. Республикăри Госагропром предприятийĕсемпе организацийĕсем декабрьте вагонсен 730 сехет чухлĕ ахаль лартнă, çавăншăн

Суйлав умĕн

ÇИТМЕНЛĔХСЕМ ТЕ ПУР-ХА

Шупашкарта В. Х. Дубинин ертсе пынипе Чăваш АССР халăх депутачĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиссийĕн черетлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Чăваш АССР Издательство, полиграфи тата кĕнеке сутас ĕç государство комитечĕ суйлав çинчен калакан Законсем, суйлав бюллетенĕсем, суйлав умĕнхи агитаци хатĕрĕсем пичетлес ĕçпе мĕнле ĕçлени çинчен унăн председателĕ Б. П. Васильков пĕлтернине итленĕ. Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ Ф. К. Павлов Шупашкарти Калинин районĕнчи суйлав округĕсене тĕрĕслении итогĕсемпе паллаштарнă.

Ларура хулари Калинин районĕнчи тата Шупашкар районĕнчи хăшпĕр суйлав округĕсенче «Чăваш АССР халăх депутачĕсен суйлавĕ çинчен» калакан Закона пăснă тĕслĕхсене пăхса тухнă. Калинин районĕнчи 38-мĕш Кăнтăр суйлав округĕнче, сăмахран, икĕ кандидатран пĕрне хӳтелеме типографире открыткăсем пичетлеттернĕ. Шупашкар районĕнчи 179-мĕш Кӳкеç суйлав округĕнче депутата суйлама кандидат тăратнă чухне Закона пăхăнман. Асăннă суйлав округĕсенчи суйлав комиссийĕсен председателĕсем Г. С. Ивановпа Ю. И. Ерыгалов ăнлантарса панисене итленĕ, тупнă йăнăшсене тӳрлетме хушнă. Калинин районĕнчи 37-мĕш Бичурин суйлав округĕнче те суйлав çинчен калакан Закона пăснă. Суйлавçăсене регистрацилемесĕрех пуху иртернĕ. Тĕп суйлав комиссийĕ пуху мĕнле иртнине тепĕр хут тĕрĕслене, округри суйлав комиссийĕ кандидата регистрацилемесĕр хăварнине тĕрĕс тесе йышăннă.

Ларура Тĕп суйлав комиссине пыракан çырусемпе, заявленисемпе тата жалобăсемпе ĕçлессине, суйлавпа çыхăннă документсене сыхлассипе çыхăннă ыйтусене пăхса тухнă, январĕн 23-мĕшĕнче округсенчи суйлав комиссийĕсен председателĕсен канашлăвне иртерме йышăннă.

КАНДИДАТСЕНЕ РЕГИСТРАЦИЛЕНĔ

Чăваш АССР халăх депутачĕсене суйлав тĕлĕшпе ĕçлекен тивĕçлĕ округри суйлав комиссийĕсем çак кандидатсене регистрацилене:

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ МУСКАВ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

47-мĕш Коопераци суйлав округĕ

университечĕн кафедра заведующийĕ, КПСС членĕ, Шупашкар хулинче пурăнать.

АССР Государство агропромышленность комитечĕн председателĕн заместителĕ, КПСС членĕ, Шупашкар хулинче пурăнать;

Александр Николаевич Капустин, 1950 çулта çуралнă, «Роставтоматстрой» наукăпа

ленекен Чăваш государство университечĕн историпе филологи факультетĕнчи студент, ВЛКСМ членĕ, Шупашкар хулинче пурăнать.

58-мĕш Тельман суйлав округĕ

ШТРАФ ТӲЛЕНИ?

Çапла шухăшлама хăнăхнă пулас вагон пушатас-тиес ĕçе [illegible] те кирлĕ пек йĕркелеме пултарайман предприятисемпе организацисен руководителĕсем. Ахăртнех, çулталăк бюджетĕнче чугун çула штраф тӳлемелли укçа-са хураççĕ пулĕ.

Чăваш АССР Статистика управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, 1989 çулхи декабрьте чугун çул станцийĕсенче, предприятисемпе организацисенче çĕршер вагона палăртнă вăхăтра пушатман е тиемен. «Чувашавтодор» пĕрлешӳ вагонсене нормативран икĕ хут, «Чувашагропромстрой» пĕрлешӳ 1,4 хут ытлашши тытнă. Республикăри Госагропром предприятийĕсемпе организацийĕсен декабрьте вагонсен 736 сехет чухлĕ ахаль лартнă, çавăншăн 1.771 тенкĕ штраф тӳленĕ. «Чувашхлебопродукт», «Чувашлес» пĕрлешӳсем те халăх хуçалăхне вагонсем нумай кирлине шута илмеççĕ, иртнĕ уйăхра вĕсен 1.256 та 873 тенкĕ штраф тӳлеме тивнĕ.

Шел пулин те, январьте те лару-тăру улшăнмасть. Эпир Шупашкар чугун çул станцийĕн тавар кантурĕпе çыхăнтамăр. Унтан çапла пĕлтерчĕç: чылай организаци груз тиесе килнĕ вагонсене талăкĕ-талăкĕпе пушатмасть. Тĕслĕхрен, «Агропромснаб» пĕрлешӳ ячĕпе оборудовани тиенĕ вагон январĕн 11-мĕшĕнче килнĕ, ăна тăвата талăк иртсен те пушатман. Шупашкар хула промторгĕ, 2-мĕш ТЭЦ, «Верхневолгомонтаж» управлени вагонсене виçĕ-тăвата хут нумайрах тытнă.

Кашни пĕрлешӳпе предприятире, организацире чугун çул вагонĕсене пушатас-тиес ĕçе лайăхлатмалла. Ку енĕпе камсем ответлă пулнине те уçăмлăн палăртни кирлĕ-тен, штраф укçине вĕсенчен шыраса илме тытăнмалла. Усси пулĕ.

А. НИКОЛАЕВ.

Шупашкарта В. Х. Дубинин ертсе пынипе Чăваш АССР халăх депутачĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиссийĕн черетлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Чăваш АССР Издательство, полиграфи тата кĕнеке сутас ĕç государство комитечĕ суйлав çинчен калакан Законсем, суйлав бюллетенĕсем, суйлав умĕнхи агитаци хатĕрĕсем пичетлес ĕçпе мĕнле ĕçлени çинчен унăн [illegible]

[illegible] ков пĕлтерĕвне итленĕ. Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ Ф. К. Павлов Шупашкарти Калинин районĕнчи суйлав округĕсене тĕрĕслени итогĕсемпе паллаштарнă.

Ларура хулари Калинин районĕнчи тата Шупашкар районĕнчи хăшпĕр суйлав округĕсенче «Чăваш АССР халăх депутачĕсен суйлавĕ çинчен» калакан Закона пăснă тĕслĕхсене пăхса тухнă. Калинин районĕнчи 38-мĕш [illegible] махран, икĕ кандидатран пĕрне хӳтелеме типографире открыткăсем пичетлеттернĕ. Шупашкар районĕнчи 179-мĕш Кӳкеç суйлав округĕнче депутата суйлама кандидат таратнă чухне Закона пăхăнман. Асăннă суйлав округĕсенчи суйлав комиссийĕсен председателĕсем Г. С. Иванова Ю. Н. Ерыгалов ăнлантарса панисене итленĕ, тупă йăнăшсене тӳрлетме хушнă. Калинин районĕнчи [illegible] округри суйлав комиссийĕ кандидата регистрацилемесĕр хăварнине тĕрĕс тесе йышăннă.

Ларура Тĕп суйлав комиссине пыракан çырусемпе, заявленисемпе тата жалобăсемпе ĕçлессине, суйлавпа çыхăннă документсене сыхласине çыхăннă ыйтусене пăхса тухнă, январĕн 23-мĕшĕнче округсенчи суйлав комиссийĕсен председателĕсен канашлăвне ирттерме йышăннă.

КАНДИДАТСЕНЕ РЕГИСТРАЦИЛЕНĔ

Чăваш АССР халăх депутачĕсене суйлав тĕлĕшпе ĕçлекен тивĕçлĕ округри суйлав комиссийĕсем çак кандидатсене регистрациленĕ:

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ МУСКАВ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

47-мĕш Коопераци суйлав округĕ

Николай Константинович **Батурин**, 1951 çулта çуралнă, «Центросоюзăн Мускаври коопераци институчĕ» потребительсен кооперацийĕн вĕренӳпе наука комплексĕн Шупашкарти филиалĕн доценчĕ, КПСС членĕ, Шупашкар хулинче пурăнать;

Станислав Павлович **Карпов**, 1932 çулта çуралнă, И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш государство университечĕн кафедра заведующийĕ, КПСС членĕ, Шупашкар хулинче пурăнать.

53-мĕш Студенчески суйлав округĕ

Евгения Михайловна **Воробьева**, 1953 çулта çуралнă, республикăри халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен территори-производство пĕрлешĕвĕн кĕпе-тумтире юсакан тата çĕлекен фабрикин Модăсен çуртĕнчи çĕвĕç, КПСС членĕ, Шупашкар хулинче пурăнать;

Борис Исакович **Егоров**, 1934 çулта çуралнă, Чăваш АССР Государство агропромышленность комитечĕн председателĕн заместителĕ, КПСС членĕ, Шупашкар хулинче пурăнать;

Александр Николаевич **Капустин**, 1950 çулта çуралнă, «Роставтоматстром» наукăпа производство пĕрлешĕвĕнчи сектор заведующийĕ, КПСС членĕ, Шупашкар хулинче пурăнать;

Атнер Петрович **Хузангай**, 1948 çулта çуралнă, И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш государство университечĕн доценчĕ, партире тăмасть, Шупашкар хулинче пурăнать;

Эдуард Витальевич **Якутов**, 1965 çулта çуралнă, И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш государство университечĕн историпе филологи факультетĕнчи студент, ВЛКСМ членĕ, Шупашкар хулинче пурăнать.

56-мĕш Тельман суйлав округĕ

Николай Прокофьевич **Карачарсков**, 1935 çулта çуралнă, РСФСР Художество фончĕн Чăваш республикинчи творчествăпа производство комбинатĕнче художник, КПСС членĕ, Шупашкар хулинче пурăнать;

Александра Максимовна **Лаптева**, 1944 çулта çуралнă, республикăри краеведени музейĕн директорĕ, КПСС членĕ, Шупашкар хулинче пурăнать.

• • •

Шупашкар хула Советĕнче халиччен 375 депутат пулнă. Вырăнти Советсен халăх депутачĕсен суйлавĕ çинчен калакан законпа килĕшӳллĕн, ку суйлавра 150 мандат çеç хăварнă. Хулари суйлав комиссийĕн секретарĕ Ю. П. Петров пирĕн корреспондента çапла пĕлтерчĕ:

— Хула Советне суйлама пурĕ 522 кандидат тăратнă. 11 округра — пĕрер, 29 округра — икшер, 39 округра — виçшер, 40 округра — тăватшар, 16 округра — пилĕкшер, 11 округра — ултшар кандидат. Хăшпĕр округсем тăрăх 7—8 кандидат таран баллотировкăна тăнă.

— Иртнĕ суйлаври хула Совечĕн депутачĕ пулман кандидатсем миçе?

— Вĕсен йышĕ — 475. Урăхла каласан, 522 кандидатран 47-шĕ кăна депутат шутланать.

— Вырăнти суйлавçăсен пухăвĕсем сĕннĕ кандидатсем пур-и?

— Ун пеккисем — 19. Кандидатсене, тĕпрен илсен, ĕç коллективĕсем (481) тата обществăлла организацисем (41) хăйсен пухăвĕсенче, пленумсенче тăратнă.

— Кандидатсем хушшинче халăхăн хăш социаллă сийĕ ытларах?

— 88 хĕрарăм, 101 рабочи. КПСС членĕсемпе парти членĕн кандидачĕсем — 321, ВЛКСМ членĕсем — 24, 30 çула çитмен çамрăксем — 60 çын. Парти работникĕсем —17, совет органĕсенче ĕçлекенсем — 8. Кандидатсен 15 проценчĕ — руководительсем.

(Хамăр корр.).

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕнче

Ӳссе пыракан ăрăва коммунизмла воспитани парас ĕçе активлă хутшăннăшăн Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Нина Андреевна Смирновăна — В. И. Ленинăн Тĕп музейĕн Шупашкарти филиалĕн совечĕн членне — Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

чрезвычайлă лару-тăру туса хурасси çинчен ыйту пăхса тухнă. СССР шалти ĕçсен министрĕ В. В. Бакатин, СССР Генеральнăй прокурорĕ А. Я. Сухарев, СССР Государство хăрушсăрлăх комитечĕн председателĕ В. А. Крючков, Азербайджан ССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Председателĕ Э. М. Кафарова, Армян ССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Председателĕ Г. М. Восканян тухса [illegible]. Ыйтăва сӳтсе явма Г. Н. Базарова, В. С. Шевченко, М. Р. Сагдиев, В. Е. Курташин, В. Г. Кучеренко, Ю. И. Бородин, Г. С. Таразевич, Ч. Айтматов, А. И. Лукьянов, Н. И. Рыжков юлташсем хутшăннă.

Сӳтсе явнă ыйтусем тăрăх СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ «Сăртлă Карабах автономи облаçĕнче тата ытти хăшпĕр районсенче чрезвычайлă лару-тăру туса хурасси çинчен» Указ йышăннă. Унăн текстчĕ хаçатсенче пичетленет.

ТĔНЧЕ УÇЛĂХĔНЧИ ВАХТĂРА

ВĔÇЕВЕ ЙĔРКЕЛЕСЕ ТĂРАКАН ЦЕНТР, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Орбитăри «Мир» комплекс çинче Александр Викторенкăпа Александр Серебров 130 кун ĕçленĕ. Уçă космоса тухассипе çыхăннă операцие вĕçленĕ хыççăн вĕсем вĕçев программине малалла пурнăçлаççĕ.

«Галлар» установка çинче космосри материаловедени енĕпе черетлĕ эксперимент ирттернĕ. Пилот тытса пыракан комплекс çинче регламентпа палăртнă профилактика ĕçĕсем пурнăçламалли графикпа килĕшӳллĕн, космонавтсем станци çинчи температурăна йĕркелесе тăракан системăн гидрокасус блокне улăштарнă.

Паян экипаж «Квант-2» модульрен санитарипе гигиена хатĕрĕсене пушатать. Каçхине, груз турттаракан кĕвапăн двигателĕсемпе усă курса, комплекс орбитине корреркцилеме палăртнă.

танлаштарсан — процентпа)	106,8	106,2	105,5	103,4	104,6

ĂЛХУÇАЛĂХĔ

Мĕнпур йышши выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк ашĕ туса илнĕ (1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа)	105	108	105	102	99,6
Пĕтĕмпе сĕт суса илнĕ (1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа)	106	105	103	101	101
Çулталăкра кашни ĕнерен сĕт суса илнĕ — килогрампа	3477	2767	2914	2930	2219
Пĕтĕмпе çăмарта туса илнĕ (1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа)	[illegible]	[illegible]	[illegible]	101	101
Кашни 100 гектар çĕр пуçне выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илнĕ (çăмарта — тĕштырă акакан кашни 100 гектар çĕр пуçне):					
аш-какай — центнерпа	119	70	123,7	82	69,7
сĕт — центнерпа	384	272	384,5	387	381,4
çăмарта — пин штук	66,4	32	70,3	93	151,3
çăм — килогрампа	43	54	50	—	—
Хуçалăхсен мĕнпур категорийĕсенче выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туянмалли плана тултарнă (çулталăк планĕнчен шутласа — процентпа):					
аш-какай	113	100,7	100	108	105
сĕт	116	102	104	108	98
çăмарта	102	107	102	107	105
çăм (таса çăм çине куçарсан)	132	104	109	103	129

КАПИТАЛЬНАЯ СТРОИТЕЛЬСТВО

Капитальнăй ĕçсем тума государство хывнă укçа-тенкĕпе усă курса тĕп фондсене ĕçе кĕртнĕ (çулталăк планĕнчен шутласа — процентпа)	106	99,4	101	86	99,6
1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа	109	103	130	108	115
Капитальнăй ĕçсем тума государство уйăрнă укçа-тенкĕпе усă курнă (çулталăк лимитĕнчен шутласа — процентпа)	105	108	106	95	106
1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа	99	108	100,3	105	122
Строительствăпа монтаж ĕçĕсен калăпăшĕ (çулталăк лимитĕнчен шутласа — процентпа)	104	102	98	97	100
1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа	91	106	91	107,7	116
Çурт-йĕр лартма государство хывнă укçа-тенкĕпе усă курнă (çулталăк лимитĕнчен шутласа — процентпа)	98	102	98	88,9	98
Социаллă пурнăçпа культура, йăла объекчĕсем тата пурăнмалли çуртсем ĕçе кĕртнĕ (çулталăк планĕнчен шутласа процентпа):					
пурăнмалли çурт-йĕрĕн пĕтĕмĕшле лаптăкĕ	107	103	99,4	98,8	102
больницăсем	140	100	64	126,7	62
шкул çулне çитмен ача-пăча учреждениейĕсем	101	103	83	82	100
Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсем	107	104	101	126	104
Ĕç тухăçлăхĕ (1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа)	105	106	104,7	101,8	106

ТРАНСПОРТ

Пурте усă куракан автомобиль транспорчĕпе усă курнă (çулталăк планĕнчен шутласа — процентпа):					
груз турттарнă	103,3	100,5	100,3	90,1	102
автобуссемпе пассажирсем илсе çӳренипе илнĕ тупăш	99,5	101	100,3	101,3	99,3

СУТУ-ИЛӲ

Ваккăн сутмалли таварçаврăнăшĕ, обществăлла апатлану предприятийĕсемпе пĕрле (отчетлă тапхăрти госзаказран шутласа — процентпа)	107,2	104,7	101,7	103,4	106
1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа	110,4	108,9	111,3	108,2	109

ПУЛĂШУ ĔÇĔСЕМ

Халăха тӳлевлĕ пулăшу ĕçĕсем туса панă (отчетлă тапхăрти госзаказран шутласан — процентпа)	105,9	104,3	105,2	106,1	107,5
1988 çулхипе танлаштарсан — процентпа	107,5	108,1	109,6	108,7	113,2

ЧĂВАШ АССР СТАТИСТИКА УПРАВЛЕНИЙĔ.

ХАЛĂХ ТАВĔ

Хаçатра пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ — 1989 çулшăн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Государство премине Г. Н. Айхи поэтпа Э. М. Юрьев художника панă. Тăван халăхăн пысăк наградине вĕсем Чăваш кĕнеке издательствинче 1968, 1974, 1987 çулсенче пичетлесе кăларнă «Франци поэчĕсем», «Венгри поэчĕсем» тата «Польша поэчĕсем» кĕнекесен ярăмне куçарса хатĕрленĕшĕн тата илемлетнĕшĕн тивĕç пулнă.

Январĕн 15-мĕшĕнче Шупашкарта, Чăваш АССР Министрсен Совечĕн залĕнче, çĕнĕ лауреатсене савăнăçлă лару-тăрура чысланă. Премни илме тивĕç пулнă поэтпа художника Чăваш АССР Министрсен Совечĕн Председателĕ Н. А. Зайцев хĕрӳллĕн саламланă, лауреат паллипе грамотине панă. Лауреатсене литературăри тата сăнарлă искусствăри ĕçтешĕсем В. И. Давыдов-Анатри поэт, кĕнеке издательствин главнăй редакторĕ В. Г. Игнатьев писатель, Н. П. Карачарсков художник, Н. Т. Терентьев драматург, Чăваш АССР Писателĕсен союзĕн правленийĕн председателĕ П. В. Афанасьев поэт, литература критикĕ А. П. Хусанкай, В. Туркай тата Г. Ф. Юмарт поэтсем, тăванĕсемпе юлташĕсем саламланă. Г. Н. Айхи поэтпа Э. М. Юрьев художник тав сăмахĕ каланă.

Н. А. Зайцев хăйĕн сăмахĕнче Геннадий Николаевич Айхи поэта ытти халăхсен литературине куçарса тăван халăх культурине пуянлатнăшăн, халăх сăмахлăхĕпе чăваш савăçĕсен хайлавĕсене ытти чĕлхесене куçарса тĕнче умне кăларас тĕлĕшпе йывăр чăрмавсене çĕнтерсе ырми-канми пархатарлă ĕçленĕшĕн тав тунă. Çак ĕçсенче Элли Михайлович Юрьев художник тӳпи те пысăк.

Савăнăçлă ларăва Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Председателĕ А. М. Леонтьев, КПСС обкомĕн секретарĕ Д. Ф. Семенов, республика Министрсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ Р. И. Ерусланова хутшăннă.

И. ИВАНОВ.

⊙ Геннадий Айхи поэтпа Элли Юрьев художник.

Ю. Дмитриев фотоӳкерчĕкĕ.

Халăх контролĕн страници

ЯНВАРЬ, № 1 (308)

Пирĕн активистсем

ЧУН ТУРТĂМĔ

— Епер Вера Александровнăпа пĕр çыру патĕнчĕр, тĕрĕслеме кайрĕ, тепрер сехетрен килмелле, — терĕ, аллинчи сехечĕ çине пăхса, Вăрнар районĕнчи халăх контроль комитечĕн председателĕ Н. А. Сидоров. — Эсир унччен ак çак характеристикăпа паллашăр-ха. Ăна эпир В. А. Троицкаяна РСФСР Халăх контроль комитечĕн Хисеп грамотине илме тăратмашкăн çырса хатĕрленĕччĕ.

Унпа паллашсан, хăйĕн çур ĕмĕрне тӳлевсĕр ĕçленĕ çын пулни паларчĕ Вера Александровна Троицкая. 1964 çултанпа районти комитетăн штатра тăман инспекторĕ вăл, 15 çул халăх сучĕн халăх заседателĕ.

Çăмăллăх килмен унăн çамрăклăхĕ, нуша-терте сахал мар тутаннă вăл пурнăçра. Çамрăк хĕрĕн кăмăл-туйăмĕ Аслă Отечественнăй вăрçă хирĕнче уйрăмах çирĕпленнĕ. Унта хăй ирĕкĕпе тухса кайнăскер, пурнăçри чăнлăхпа тĕрĕслĕхĕн, ултавпа кураймалăхăн уссипе сиенне самай туйса илнĕ. Правительствăн тăхăр орденĕпе медальне çакса таврăннă вăл хăй çуралса ӳснĕ Канаша, финанс техникумне вĕренме кĕнĕ. Ăна ăнăçлă пĕтерни хыççăн мĕн пенсие тухиччченех Вăрнарти финанс органĕсенче ĕçленĕ, «Финанс ĕçĕн отличникĕ» хисеплĕ ята тивĕç пулнă.

Характеристикăра В. А. Троицкая принциплă, тӳрĕ кăмăллă çын пулни çинчен темиçе хут та асăннă. Ăнсăртран мар ку. Вăрнартах ăна «район аслатийĕ» темине илтрĕм. Ытахальтен çапла каламаççĕ, паллах. Чылайăшĕ, шалти ĕçсен пайне е прокуратурăна чарăнмасăр, ун патне пыни те çакнах çирĕплетет. Пĕлеççĕ: Вера Александровна пуçланă ĕçе вĕçне çитеретех, айăпа кĕрекенĕ тăван е пĕлĕш тесе пăхса тăмасть, тăрă шыв çине кăларать.

Пӳлĕме вăтам пӳллĕ, çамрăках мар хĕрарăм кĕрсе тăчĕ. «Иван Аркадьевич, вырăна çитсе килтĕм, мĕн çырни çирĕпленчĕ, — терĕ комитет председателĕ умне пырса. — Акт çырса районпа тăратмалла пуль...»

В. А. Троицкая районти комитетăн сутă-илӳ, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе ĕçлекен штатра тăман пайĕн заведующийĕ. Халĕхи вăхăтри йывăр ĕçсенчен пĕри. Таварсем çитменнипе сутă-илӳре уйрăмах йĕркене пăсакансем йышлă. Çакна комитета пыракан çырусем, телефонпа шăнкăравласа пĕлтернĕ хыпарсем те лайăх çирĕплетеççĕ.

Иртнĕ çул, акă, комитета 137 çыру пынă, вĕсенчен ытларахăшĕ — сутă-илӳ йĕркине сĕмсĕррĕн пăснине пĕлтернисем. Кашни çырăва вырăна тухса тĕрĕслемелле, вĕсем пирки мерăсем йышăнмалла, çыракансене пĕлтермелле.

— Хăйсемшĕн çеç хывса çунса тавар пытарса сутакансене пуçран шăлса нăçаркка тарăхтарать мана, — шухăшлăн каласа хучĕ штатра тăман инспектор. — Ячĕшĕн выговор парам пекки тăваççĕ е 10 — 15 тенкĕ штраф тӳлеттереççĕ. Сутă-илӳ йĕркине пăснăшăн уголовнăй ĕç пуçарма никамăн та ал çĕкленмест. Çавăнпа ĕнтĕ ним хăрамасăр ирттереççĕ.

Алла Калининăра пурăнакан Г. В. Александрова çырнă çырăва тытатăп. «Манăн икĕ ача, — çырать Роза Васильевна. — Юлашки икĕ çулта кĕçĕн хĕрача валли талонпа аран-аран пĕр мăшăр колготки туянтăм. Ытти пасартан вунă тенкĕ парса илтĕм. Кӳршĕри Канаш районĕнчи ялсенчи магазинсенче вĕсене талонпа ирĕккĕнех сутаççĕ. Пирĕн ялта вара манăн ачасен шучĕпе пĕрисен купаланса выртмалăх пур, теприсем тивĕçлине те туянаймаççĕ».

Çакăн пек çырусем кивĕнĕ чухне лăпкăн ларма пултараймасть, паллах, Вера Александровна, ватлăхне, çулĕ иртнине пăхмасăр вырăна васкать.

— Мана аллисене кукăртнă çынсем кураймани мар, таса чун-чĕрепе пурăнакансем хисеплени темрен те пахарах, — терĕ ĕç ветеранĕ.

Çак сăмахсене вăл халăх умĕнче чапа тухас тесе мар, хăйĕн чун-чĕри таса пулнине ĕнентересшĕн каларĕ пулас. Эпир вара Вăрнара пырсанах вăл çавăн пек çын пулнине пĕлтĕмĕр. Акă пĕр тĕслĕх. Вера Александровна Вăрнарта хăйĕн кил-çуртĕнче пурăннă. Вăл кивелсе юхăннă. Хваттер илес тесе, поселок Совечĕн ĕçтăвкомне черете тăнă. Пурăна киле, халăх контролерĕ йĕркесĕрлĕхе хирĕç çине тăрса кĕрешнине курса, ĕçтăвкомра унăн заявленийĕ те таçта çĕтнĕ. «Санăн пиччӳ А. А. Иванов Совет Союзĕн Геройĕ, райĕçтăвкомра ответлă вырăнта ĕçлет, сире хваттер туса парасси уншăн ним те мар», — текенсем те пулнă. Хăйне «шеллекенсем» хыççăн кайса, тăванĕ патне пулăшу ыйтма пыман Вера Александровна, суяпа ултава хирĕç тата çине тăрарах кĕрешме тытăннă.

Пĕр вăхăтра, акă, Вăрнарти аш-какай комбинатĕнчи ултавçăсене тăрă шыв çине кăларнă. Çак хыпар районта çеç мар, республикипех сарăлчĕ. Халĕ те калаççĕ. Ун чухне предприятире туса кăларнă 10 тонна кăлпассие çисе çынсем чирленĕ. Кайăк-кĕшĕк цехне реконструкцилетпĕр тесе 35 пин тенкĕ укçапа çилпе вĕçтернĕ. А. Жукова аслă мастер иртĕхсе пурăнни те вырăна тухсан çирĕпленнĕ. Тĕрлĕ майпа пытарма тăрăшнă районти контролерсем тупса палăртнă çитменлĕхсене, анчах В. А. Троицкаяпа унăн юлташĕсем ăна пĕтерсе хума паман. РСФСР Халăх контроль комитетĕнчен килнĕ комисси вырăнти дозорнăйсене пулăшнă.

В. А. Троицкая хăй таврра принциплă та таса чун-чĕреллĕ çынсене пухнă. Вĕсем — райпланри А. П. Короткова аслă экономист, Л. П. Поспелова пенсионерка, Калинино ял Совечĕн ĕçтăвкомĕ çумĕнчи халăх контроль группин председателĕ Г. П. Галкин тата ыттисем. «Шанчăклă çынсем, — сăнĕ самантрах çуталчĕ пай заведующийĕн. — Вĕсемпе темĕнле йывăр ĕç те тума пулать».

Общество ĕçне ырми-канми хутшăннăшăн В. А. Троицкаяна РСФСР тата Чăваш АССР Халăх контроль комитечĕсен Хисеп грамотисемпе наградăланă, сăнне республикăри Халăх контроль комитечĕн Хисеп хăми çине вырнаçтарнă. Тивĕçлĕ вăл çав хисепе. Эппин, ăна малашнехи ĕçĕнче те ăнăçу сунар.

И. КЛЕМЕНТЬЕВ.

КАШНИНЧЕН ÇИРĔП ЫЙТСА

Опыт, пуçарулăх

Пысăк предприятисенче татса паман ыйтусем те нумай. Анчах Сĕнтĕрвăрринчи «Проммеханизация» заводри халăх контролерĕсем нихçан та çухалса каймаççĕ. Кунта сăнавлă тата стандартлă мар оборудовани туса кăлараççĕ. Çавна май çĕршыври тĕрлĕ предприятисенчен илсе тăракан чĕртаварăн кашни килограмĕ шутра. Цехсемпе участоксенче ăна тирпейлĕ тытни, перекетлени кирлĕ.

— Халăх контролерĕсем çакна яланах асра тытаççĕ, — тет заводри группа председателĕ Ю. Яковлев.

— Шанса панă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа туса пырсан, кирек мĕнле кăткăс ыйтăва та ăнăçлă татса пама пулать. Кусçеç те мар. Хамăрăн кулленхи ĕçре заводри профсоюз комитечĕ тата йышлă актив çине таянатпăр, ĕç коллективĕн совечĕпе тачă çыхăну тытатпăр, — калаçăва хутшăнчĕ халăх контроль группин членĕ Е. Сергеева.

Халăх контроль группи хăйĕн ĕçне çирĕп план тăрăх туса пырать. Кун пек чухне цехсемпе участоксенчи постсемпе тачă çыхăну тытма, вĕсене рейдсемпе тĕрĕслевсене хутшăнтарма лайăх майсем тухса тăраççĕ. Акă мĕншĕн рейдсемпе тĕрĕслевсен пĕлтерĕшĕ тата витĕмлĕхĕ ӳсет, ĕç е производство дисциплинине пăснă пĕр тĕслĕх те айккине тăрса юлмасть. Халăх контролерĕсен ĕçĕнчи тепĕр уйрăмлăха та палăртмалла. Ĕç участокĕсенчен пĕлтерекен кашни хыпара сийĕнчех шута илеççĕ. Унтан вăрттăнлăх тумаççĕ. Кун пирки, чи малтанах, группа членĕсемпе сӳтсе яваççĕ. Унтан, ытах кирлĕ пулсан, тĕрĕслев ирттереççĕ. Кашни участокрах хăйне уйрăм узел е оборудовани пухаççĕ. Çакна асра тытса тĕрĕслеве специалистсене явăçтараççĕ. Кайран, тĕрĕсленĕ хыççăн, тупса палăртнă тĕслĕхсене участоксемпе бригадăсенче пăхса тухаççĕ.

Халăх контроль ĕçĕнчи усăллăх унăн авторитетне çĕклет. Массăллă рейдсем ирттернĕ çĕре цехсемпе участоксенчи активистсене анлăн хутшăнтарма пулăшать. Сăмахран, ĕç укçи панă кун ирттернĕ тĕрĕслев вăхăтĕнче хăшпĕр рабочисем ӳсĕр пулнине е вăхăт ситиччен ĕçрен кайнине палăртнă. Прессăпа сварка участокĕнче, акă, Киселев ертсе пыракан бригадăри 6 рабочи ӳсĕр пулнă. Компрессор установкин машинистне Душкина ĕç вырăнĕнче эрех ĕçнине асăрханă. Халăх контролерĕсем çакăн çинчен сийĕнчех ĕçкĕпе иртĕхнине хирĕç кĕрешекен комиссие пĕлтернĕ. Ĕç дисциплинине сĕмсĕррĕн пăсакансене ответ тыттарнă. Коммуналлă строительство пайĕнче ĕçлекен Александрова ĕçкĕпе иртĕхнĕшĕн КПСС ретĕнчен кăларнă.

Хăшпĕрисем, ĕçрен вăхăт ситиччен тухса кайма юратакансем, çын курман вăрт-

рăшаççĕ. Анчах халăх контролерĕсен сивĕч куçĕсем чеелĕхпе ултав çулĕ çине тăма хăтланакансене те тăрă шыв çине кăлараççĕ. Компрессор установкин машинисчĕ Крупнова, электроучастокра ĕçлекен Фроловпа Шипунова ĕçрен ир кайнăшăн уйăхри премии укçине памасăр хăварнă.

— Халăх контролерĕсем цехсемпе участоксенче чĕртаварпа, электроэнергипе мĕнле усă курнине те час-часах тĕрĕслеççĕ. Оборудованипе пĕлсе усă курни, рабочисен профессиллĕ ăсталăхне тăтăшах ӳстерсе пыни ĕç тухăçлăхне хăпартма тата чĕртаварпа перекетлеме пулăшать. Анчах перекетленĕ чĕртаварпа кирлĕ пек усă курни палăрсах каймасть-ха, — тет Е. Сергеева.

Мĕн каланине тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕ вăл. Ĕçе юрăхлă швеллер татăкĕсене е кĕтеслĕ тимĕре, пăрахăçланă детальсене тепĕр чухне тĕрĕслемесĕрех сӳп-çаппа пĕрле цехсен тулашне кăларса пăрахнă. Халăх контроль группи сĕннипе завод администрацийĕ ку ыйтăва цехсемпе участоксенче пĕр хутчен мар хускатнă, вĕсен пуçлăхĕсене асăрхаттарнă. Çапах та ку енĕпе вăхăтра çирĕп йĕрке туса çитереймен. Электродсемпе перекетлĕ усă курманни те çакна усăмлă çирĕплетсе панă.

Завод сăнавлă оборудованипе уйрăм детальсем нумай туса кăларать. Вĕсенчен хăшпĕрисене, заказсем вăхăтра илменнипе, тепĕр хут сăрласа çĕнетме тивет. Çакна шута илсе, халăх контролерĕсем цехсемпе участоксенче лакпа тата сăрăсемпе мĕнле усă курнине тĕрĕсле-рĕ. Çавăн хыççăн лакпа сăрă складĕнче çирĕп йĕрке тунă. Юлашки вăхăтра ирттернĕ тĕрĕслев цехсемпе участоксенче лакпа тата сăрăсемпе техникăлла висене пăхăнса çеç усă курнине кăтартса панă.

«Проммеханизация» заводра ĕçлекенсем, тĕпрен илсен, хулан Коноваловăри çĕнĕ микрорайонĕнче пурăнаççĕ. Кунта ку чухнехи типлă проектсем тăрăх нумай хваттерлĕ çуртсем туса лартнă. Халăх контроль группин членĕсем çав çуртсенче пурăнакансем электроэнергипе мĕнле усă курнине тĕрĕсленĕ. Акă мĕн палăртнă: 90 тата 100 хваттерлĕ çуртсене йышăннă чухне электрощитсемпе электросчетчиксене тĕрĕслеме кирлине никам та асне илмен. Вĕсенче пурăнакансем электроэнергипе тĕлли-паллисĕр усă курнă. Хăшпĕр электросчетчиксем пачах ĕçлемен е тĕрĕс мар кăтартнă. Çак сăлтава пула электроэнергипе усă курнăшăн 15.584 тенкĕ çеç, урăхла каласан, тивĕçлĕ хисепрен 9. 695 тенкĕ сахалрах тӳленĕ. Халăх контроль группи сĕннипе çакăншăн çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пайĕнче ĕçлекенсене ответ тыттарнă, унăн начальникĕ пулнă А. Харитоновăран 130 тенкĕ шыраса илнĕ.

Халăх контролерĕсем ачапăча учрежденийĕсене çитсе курма та ӳркенмеççĕ. «Золотой ключик» ясли-садра, тĕслĕхрен, хĕллехи вăхăтра кирлĕ чухлĕ ăшă тытман. Кунта тасалăхпа тирпейлĕх тивĕçлĕ шайра пулманнине те палăртнă. Çакна «Халăх контроль кĕтесĕнче» çакса хунă фотоӳкерчĕксем сăнласа кăтартнă. Сивĕч критика хыççăн çеç ача садĕнче çирĕп йĕрке тунă.

Дозорнăйсем ĕç коллективĕсенче час-часах отчет тăваççĕ. Çакă пĕр-пĕрин хушшинчи ĕçле туслăха сиплелетет тата сăмах вĕççĕн е çырса пĕлтерекен сигналсем тăрăх вăхăтра тивĕçлĕ мерăсем йышăнма пулăшать. Акă, халăх контроль группине заводран тивĕçлĕ документсем çыртарса илмесĕрех япаласем тиесе тухни çинчен пĕлтерчĕ. Тĕрĕслев ирттерсен йышăнран тĕрлĕ япаласем илсе тухакансем мастерĕн В. Мирончукăн хăйĕн айăпне йышăнма тата ответ тытма тивнĕ. «Золотой ключик» ясли-садра ĕçлекен Крылова 1,5 тонна пырĕпне 5 тонна сĕркăмрăкĕ турттарса тухма хăтланнă. Контролерсем вăхăтра тытса чарнă ăна. Висерен ытлашши тиенĕ сĕркăмрăкне каялла таварса пама тивнĕ.

Группа ĕçĕнчи чи паха енсенчен пĕри вăл — хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен завод коллективне тăтăшах пĕлтерсе тăни. Çак тĕллевпе кунта «Çисĕм» хаçат кăларса тăраççĕ. А. Краснов художник пуçарнипе «Заводри халăх контроль группин кĕтесĕ» тата «Фотоӳкерчĕк айăплать» витринăсем йĕркеленĕ. Районта ирттерен смотр-конкурсра çак витринăсем пĕрремĕш вырăн йышăннă, Хисеп грамоти илме тивĕç пулнă.

— Предприяти пĕр тикĕс ĕçлессипе халăх контролерĕсем тимлĕ пулнинчен, урăхла каласан, тĕрĕслевсен вăхăтĕнче палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме администрацийĕпе общество организацийĕсене тивĕçлĕ пулăшу панинчен нумай килет. Коллектив иртнĕ çул производство планне ăнăçлă пурнăçларĕ. Çакăнта халăх контролерĕсен тӳпи те пысăк, — тет заводри профком председателĕ В. Кормачев.

В. КУЗНЕЦОВ.
(Хамăр корр.)

Вырăнти комитетсенче

ЭЛЕК

Калинин ячĕпе хисепленекен колхозра ялхуçалăх техникине хĕл каçарма йĕркеллĕ вырнаçтарса лартман. Тĕштырă пухмалли сакăр комбайна сӳп-çапран тасатман, касакан ĕçсесене илмен, виççĕшĕ, çу сĕрменнипе, тутăхнă. Сăнчăрсемпе чĕнсене бункера тултарса хунă, пĕр комбайнĕн аккумуляторне те тĕнĕмен. Вылăх апачĕ пухса илмелли агрегатсене, сеялкăсене, культиваторсене те ГОСТ требованийĕсене пăхăнмасăр упрама лартнă.

«Динамо» колхозра та ялхуçалăх техникине хисеплемеççĕ. Тĕштырă пухмалли тăватă комбайна хĕл каçарма хатĕрлемен, тутăхакан пайсене çу сĕрмен. Жаткăсене, сеялкăсене, культиваторсене кирлĕ пек упрамаççĕ.

Ялхуçалăх техникине хĕл каçарма йĕркеллĕ вырнаçтарса лартманшăн районти халăх контроль комитечĕ Калинин ячĕпе хисепленекен тата «Динамо» колхозсен тĕп инженерĕсене А. Михеевпа

Калинин ячĕпе хисепленекен колхозра ялхуçалăх техникине хĕл каçарма йĕркеллĕ вырнаçтарса лартман. Тĕштырă пухмалли сакăр комбайна çÿп-çапран тасатман, касакан çĕççисене илмен, виççĕшĕ, çу сĕрменнипе, тутăхнă. Сăнчăрсемпе чĕнсене бункера тултарса хунă, пĕр комбайнĕн аккумуляторне те тĕкĕнмен. Выльăх апачĕ пухса илмелли агрегатсене, сеялкăсене, культиваторсене те ГОСТ требованийĕсене пăхăнмасăр упрама лартнă.

«Динамо» колхозра та ялхуçалăх техникине хисепленесе, тĕштырă пухмалли тăватă комбайна хĕл каçарма хатĕрлемен, тутăхакан пайсене çу сĕрмен. Жаткăсене, сеялкăсене, культиваторсене кирлĕ пек упрамаççĕ.

Ялхуçалăх техникине хĕл каçарма йĕркеллĕ вырнаçтарса лартманшăн районти халăх контроль комитечĕ Калинин ячĕпе хисепленекен тата «Динамо» колхозсен тĕп инженерĕсене А. Михеевпа Г. Капарова выговор панă.

КУСЛАВККА

Районти халăх контролерĕсем райĕçтăвкомăн пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пĕрлешĕвĕнче ĕç дисциплини мĕнле шайра тăнине тĕрĕсленĕ, пĕрлешÿ нумай кăтартусем енĕпе юлса пыни вырăнта ĕçкĕпе иртĕхекенсемпе çителĕксĕр кĕрешнинчен килнине палăртнă.

Коллективра ĕç дисциплини япăхса кайнă, çавна май кадрсем час-часах улшăнса тăраççĕ. 1989 çулта, акă, 64 çынна ĕçе илнĕ, 49-шне ĕçрен кăларнă, ытларахăшне — ĕçре ÿсĕр пулнăшăн, прогул тунăшăн. Апла пулин те, ĕç коллективĕнче урăлтаркăча лекнĕ, прогул тунă пĕр çынна та сÿтсе явман. Ĕçкĕпе иртĕхекенсене хирĕç кĕрешекен комисси кирлĕ пек ĕçлемест. Пĕрлешÿре ирĕклĕ халăх дружини, юлташла суд йĕркелемен.

Çак ыйтăва хăйĕн ларăвĕнче пăхса тухса, районти халăх контроль комитечĕ ĕçкĕпе иртĕхекенсене хирĕç çителĕксĕр кĕрешнĕшĕн пĕрлешÿ начальникне А. Буянова хытă асăрхаттарса хăварнă, ĕç дисциплинине çирĕплетме хушнă.

ÇĔМĔРЛЕ

Тĕрĕслев иртерсе. Саланчăкри интернат-шкулта хуçасăрлăха пула финанс дисциплинине пăсни тупса палăртнă. Шкул руководителĕсем финанс документчĕсене çырса пырасси, отчетсем тăратасси çине çиелтен пăхнă, хăшпĕр çынсем ĕçлемесĕр укçа илнĕ.

Интернат-шкулăн хушма хуçалăхĕнче сысна çурисене лайăх тăрантарса усраманнипе 17-шĕ вилнĕ. Шкула 405 тенкĕлĕх тăкак кÿнĕ. Тĕрĕслев вăхăтĕнче шкул директорне Г. Ларкузова вилнĕ сысначемшĕн айăплă çынсене пурлăх тĕлĕшĕнчен ответ тыттарма хушнă, анчах вăл çакна пурнăçламан. Хушма хуçалăхра выльăхсен йышне те кирлĕ пек шута илсе тăман.

Финанс дисциплинине пăснăшăн, выльăх-чĕрлĕхе йĕркеллĕ усрама мерăсем йышăнманшăн шкул директорне Г. Ларкузова çирĕп выговор панă, унăн пĕр уйăхри ĕç укçине тытса юлма йышăннă.

З. В. Яшумова Çĕмĕрлери автофургонсен комбинатĕнчи иккĕмĕш цехра станочниксен бригадине ертсе пырать. Иртнĕ çул çак бригада предприятире темиçе хутчен те класлă вырăнсене йышăннă.

Зинаида Васильевнăна коллективра общество ĕçне хастар хутшăннипе лайăх пĕлеççĕ. Вăл — комбинатри халăх контроль группин членĕ. Дозорнăй ертсе пыракан бригадăра пĕлтĕр ĕç тухăçлăхĕ 8,3 процент ÿснĕ, коллектив йывăç, электроэнерги сахал мар перекетленĕ.

Ÿкерчĕк çинче: З. В. Яшумова (сылтăмран иккĕмĕшĕ) Е. Гурьянова, Л. Храпкова, Н. Смирнова тата Н. Давыдова рабочисемпе калаçать.

Ю. Дмитриев фотоÿкерчĕкĕ.

уççăнлăх унăн авторитетне çĕклет. Массăллă рейдсем ирттернĕ çĕре цехсемпе участоксенчи активистсене анлăн хутшăнтарма пулăшать. Сăмахран, ĕç укçи панă кун ирттернĕ тĕрĕслев вăхăтĕнче хăшпĕр рабочисем ÿсĕр пулнине е вăхăт çитиччен ĕçрен кайнине палăртнă. Пресспа сварка участокĕнче, акă, Киселев ертсе пыракан бригадăри 6 рабочи ÿсĕр пулнă. Компрессор установкин машинисчĕ Душкина ĕç вырăнĕнче эрех ĕçнине асăрханă. Халăх контролерĕсем çакăн çинчен çийĕнчех ĕçкĕпе иртĕхнине хирĕç кĕрешекен комиссие пĕлтернĕ. Ĕç дисциплинине сĕмсĕррĕн пăсакансене ответ тыттарнă. Коммуналлă строительство пайĕнче ĕçлекен Александрова ĕçкĕпе иртĕхнĕшĕн КПСС ретĕнчен кăларнă.

Хăшпĕрисем, ĕçрен вăхăт çитиччен тухса кайма юратакансем, çын курман вăрттăн çулсемпе усă курма тă-

Завод санавла оборудованипе уйрăм детальсем нумай туса кăларать. Вĕсенчен хăшпĕрисене, заказсем вăхăтра илменнипе, тепĕр хут сăрласа сĕнетме тивет. Çакна шута илсе, халăх контролерĕсем цехсемпе участоксенче лакпа тата сăрăсемпе мĕнле усă курнине тĕрĕсленĕ. Çавăн хыççăн лакпа сăрă складĕнче çирĕп йĕрке тунă. Юлашки вăхăтра ирттернĕ тĕрĕслев цехсемпе участоксенче лакпа тата сăрăсемпе техникăлла висене пăхăнса çеç усă курнине кăтартса панă.

«Проммеханизация» заводра ĕçлекенсем, тĕпрен илсен, хулан Коноваловăри çĕнĕ микрорайонĕнче пурăнаççĕ. Кунта ку чухнехи типлă проектсем тăрăх нумай хваттерлĕ çуртсем туса лартнă. Халăх контроль группин членĕсем çав çуртсенче пурăнакансем электроэнергипе мĕнле усă курнине тĕрĕсленĕ. Акă мĕн палăртнă: 90 тата 100 хваттерлĕ çуртсене йы-

сенчен пĕри вăл — хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен завод коллективне тăтăшах пĕлтерсе тăни. Çак тĕллевпе кунта «Çиçĕм» хаçат кăларса тăраççĕ. А. Краснов художник пуçарнипе «Заводри халăх контроль группин кĕтесĕ» тата «Фотоÿкерчĕкĕн айăплать» витринăсем йĕркеленĕ. Районта ирттернĕ смотр-конкурсра çак витринăсем пĕрремĕш вырăн йышăннă. Хисеп грамоти илме тивĕç пулнă.

— Предприяти пĕр тикĕс ĕçлесси халăх контролерĕсем тимлĕ пулнинчен, урăхла каласан, тĕрĕслевсем вăхăтĕнче палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме администрацие общество организацисене тивĕçлĕ пулăшу панинчен нумай килет. Коллектив иртнĕ çул производство планне ăнăçлă пурнăçларĕ. Çакăнта халăх контролерĕсен тÿпи те пысăк, — тет заводри профком председателĕ В. Кормачев.

В. КУЗНЕЦОВ.
(Хамăр корр.).

Хаçатра çырнă хыççăн

«КИРЛĔ-ШИ КОЛХОЗРА ТĔРĔСЛЕВÇĔ?»

Хуçалăхри халăх контроль группин председателĕ В. Михайлов çырнă статьяна колхоз правленийĕн анлă ларăвĕнче пăхса тухрăмăр. Унта çырса панă хăшпĕр тĕслĕхсем тĕрĕс. Иртнĕ çул Шупуç бригадинче юлнă вăрлăха колхозăн тĕп складне хывнă, çак ĕçе мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăма колхозăн ревизи комиссийĕпе халăх контроль группине хушса хăварма, юлнă пăрçана Шупуç бригадин столовăйĕнче механизаторсене апат пĕçерсе çитерни çинчен В. Васильев бригадира акт çырса тăратма йышăннă. Кукуруза вăрлăхне, вăл юрăхсăра тухнă пирки, акт çырса шутран кăларма пăхнă.

800 килограмм курăк вăрлăхне шута илменшĕн колхозăн тĕп агрономне В. Григорьева уполномоченнăйсен пухăвĕнче асăрхаттарса хăварнă. 260 килограмм курăк вăрлăхне шутран кăларма çырнă акта çирĕплетнĕ.

З. Петров колхозник 8 михĕ кукуруза вăрлăхне киле илсе кĕнĕ тени тĕрĕс мар. Вăрлăха, акма тата выльăхсене çитерме юрăхсăр пулнипе (вăрлăх çинче чул пĕрчисем нумай) пĕвене тăкнă. Çакăншăн З. Петрова асăрхаттарнă.

Хуçалăхри халăх контроль группин председателĕ В. Михайлов çырнă статьяра Ыхракасси бригадинче 8 гектар çине акнă викăпа сĕлĕ хутăшĕ сайра шăтнă, вăрлăха айкинелле сутнă, тенĕ. Пĕлтĕр çанталăк типĕ пулнă пирки ытти бригадăсенче те викăпа сĕлĕ хутăшĕ сайра шăтнă. Йĕтем çинче алланă хыççăн 8 тонна викăпа сĕлĕ хутăшне склада кĕртнĕ, уй-хир ĕçĕсем пуçланса кайнă май унăн каяшне иккĕмĕш хут аллама май килмен, ăна силос çине янă.

Колхоз правленийĕ халăх пурлăхне хапсăнакансене пытарса хăварни палăрать, тени çирĕпленмерĕ. Колхоз правленийĕн апрель уйăхĕнчи ларăвĕнче Н. Михайлова зоотехника ĕçрен хăтарнă, ферма заведующине А. Петровăна çирĕп выговор панă. Вĕсен ĕçĕсене следстви органĕсем тĕрĕсленĕ, укçана хăйсен кĕсйине чикни çирĕпленмен. Çавăн пекех 5 пин килограмм сĕт укçине хапсăннă тени те тĕрĕс мар. Унччченхи колхоз председателĕ вилнĕ пирки никама та ответ тыттарма май çук тесе, ĕçе хупнă. А. Петрова ку ĕçпе çыхăнман.

В. БОГДАНОВ,
Красноармейски районĕнчи «Большевик» колхоз председателĕ.

ТАКАМ ТУСА ПАРАС ПЕК

Хуçалăхсен пĕрлехи «Янтиковская» строительство организацийĕ тĕрлĕ çулсенче Тăвайĕнче пурăнмалли вунă çурт туса лартнă. 164 çемье пурăнать вĕсенче. Мĕнле тытса тăрать-ха çав çурт-йĕре асăннă организаци? Иртнĕ çул вĕсенче районти халăх контролерĕсем çав ыйтупа интересленчĕç.

Тÿрех калас пулать, строительство организацийĕн руководителĕсем (начальникĕ В. Васильев) çуртсене усă курма панă хыççăн вĕсене пăхса тата юсаса тăрасси çинчен маннă. Юсав ĕçĕсем пурнăçлама график та хатĕрлемен, хваттерсенче пурăнакансен шухăш-кăмăлне, сĕнĕвĕсене те шута илмен. Нумай çул хушши пăхса тăманнине пула çуртсем кивелсе юхăннă, инженери оборудованийĕ юрăхсăра тухнă.

Район центрĕнчи ытти ведомствăсен çурт-йĕрĕ те, хуçасăрлăха пула, вăхăтсăр юхăннă. Чылай предприятипе организаци, коллектив членĕсене хваттерпе тивĕçтерессине тĕп вырăна хурса, унччен тунисем çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ. Çурт-йĕре тытса тăрасси мĕнле каткăс ĕç пулнине шута илсех кайман. Вĕсене ĕçе янă хыççăн тĕрлĕ ыйту сиксе тухнă: пĕр хваттере ăшă пымасть, тепринче шыв çук, виççĕмĕшĕнче газ çунмасть. Çакă, паллах, ĕç пахалăхĕ çине кирлĕ пек пăхманнинчен, хуçа туйăмне çухатнинчен килнĕ.

Хуçасăрлăха мĕнле пĕтермелле-ха? Районта, акă, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн производство управленийĕ пур. Шел пулин те, халлĕхе вăл хăйĕн тĕп тивĕçне пурнăçласа пыраймасть, пытармасăр каласан, хут çинче кăна шутланать. Мĕнпур çурт-йĕре пăхса тăрассине унăн аллине памалла, управлени пурлăхпа техника никĕсне çирĕплетмелле. Çакăн пек шухăш патне пырса тухрĕç контролерсем, районти тивĕçлĕ органсем умне ыйту лартрĕç, конкретлă мерăсем йышăнма ыйтрĕç.

Перекетлĕхпе тирпейлĕхшĕн

Иртнĕ çулхи октябрь — декабрь уйăхĕсенче халăх контроль органĕсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем иртрĕç. Ĕçсыннисем тĕрлĕ енлĕн пăхса хакларĕç дозорнăйсен ĕçне, ĕç дисциплинине çирĕплетме, хуçасăрлăх çулне пÿлме кирлине палăртрĕç. Тĕрĕс ĕнтĕ, юлашки вăхăтра ĕç дисциплини хавшани усăмлăнах сисĕнет. Тĕслĕхрен, районти кирпĕч завочĕн ĕçне илсе пăхăпăр. Кунта производство технологине сĕмсĕррĕн пăсаççĕ, тĕрлĕ йышши кирпĕче пĕр маркăпах реализацилеççĕ. Кама усă курет çакă? Никама та. Завод хăй те тăкак тÿсет, туянакансене те чике тăршшех лартаççĕ. Хуçасăрлăх çултан-çула тăсăлать. Предприятире оборудовани кивелнĕ, ăна улăштарма укçа-тенкĕ тупаймаççĕ. Йывăрлăхран тухма пĕр çул çеç: заводра çирĕп йĕрке туса хумалла, çынсене кашни пуса хаклама вĕрентмелле. Халăх контролерĕсем çак ыйтăва тĕплĕн тишкерсе, усăллă канашсем пачĕç.

Районти халăх контроль комитечĕпе унăн активисчĕсем тĕрĕслевсен витĕмлĕхне ÿстерессишĕн тĕллевлĕн ĕçлеме тăрăшаççĕ. Малтан туса хатĕрленĕ планпа ĕçлетпĕр, тĕрĕслевсене тĕплĕн хатĕрленетпĕр. Агропромышленность комплексĕ çине тимлĕ пăхатпăр. Хальхи ответлă участоксенчен пĕри — выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарасси. Колхозсемпе совхозсенче витесене, кормоцехсене, тĕрлĕ йышши механизмсемпе оборудование хĕле мĕнле хатĕрленине массăллăн тĕрĕслерĕмĕр, хальхи вăхăтра вĕсене мĕнле ĕçлеттернине куçран вĕçертместпĕр. Çитменлĕхсене вăхăтра асăрхани вĕсене вăхăтра пĕтерме май парать. Шел пулин те, дозорнăйсем асăрхаттарнине пур çĕрте те хăлхана чикмеççĕ-ха. Пирĕн активистсем, акă, «Шимкусский» совхозпа «60 лет Октября» колхозра ăратлăха лайăхлатас, çамрăк выльăхсене упраса хăварас тесе кирлĕ пек тăрăшманнине курса ĕненчĕç. Анчах контролерсен сĕнĕвĕсене шута илни сисĕнсех каймасть-ха.

Кĕрхи уйăхсенче колхозсемпе совхозсенче, хатĕрлевпе суту-илÿ, продукци тирпейлекен предприятисенче çĕрулмипе пахчаçимĕçе йышăнма, реализацилеме тата упрама мĕнле хатĕрленнине массăллăн тĕрĕсленĕ. Апат-симĕç продукчĕсене суту-илÿпе общество апатлану предприятийĕсенче çителĕклĕ хывса хăварчĕç, типтерлĕ сыхласа упрама мерăсем йышăнчĕç. Халĕ çав çимĕçсем магазинсенче, столовăйсемпе кафесенче çителĕклĕ.

Ĕç ăнăçлăхĕ кадрсенчен килет. Иртнĕ çулхи отчетпа суйлав пухăвĕсем хыççăн группăсемпе постсен ĕçне пусаруллă активистсем нумай хутшăнчĕç. Чи малтан эпир вĕсене хăшпĕр хуçалăхсенчи группăсен паха опычĕпе паллаштарма шутларăмăр. Çак тĕллевпе нумай пулмасть «Кубнинский» совхозри группа обществăлла организацисемпе мĕнле çыхăну тытса ĕçленине тишкертĕмĕр. Вĕренмелли сахал мар пулчĕ. Совхоз вăй илсе пынинче вырăнти дозорнăйсен тÿпи пысăккине çĕнĕрен суйланă активистсем хăйсен куçĕпе курса ĕненчĕç.

Хуçасăрлăха пĕтерес ĕçре уççăнлăх паллă вырăн йышăнать. Çавăнпа хамăр мĕнмĕн туса ирттернине, ÿлĕмрен мĕн тума хатĕрленнине ĕçсыннисене анлăн пĕлтерсе тăратпăр. Халăхпа пĕрле ĕçлесен кăна çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерсе пыма май килĕ.

И. ДМИТРИЕВ,
Тăвай районĕнчи халăх контроль комитечĕн председателĕ.

«КОММУНИЗМ ЯЛАВНЕ» ОТВЕТЛЕÇÇĔ

«Çурт хупăнать»

Иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче çак ятпа халăх контролĕн страницинче пичетленнĕ критикăлла корреспонденцири фактсем тĕрĕс. Çурт-йĕре хутса ăшăтма топливо çителĕксĕррине шута илсе, район Совечĕн ĕçтăвкомĕ 1991 çулта яслесене газ кĕртмешкĕн документсем хатĕрлеме, халăхăн социаллă пурнăç условийĕсене ытти енĕпе лайăхлатма мерăсем йышăнать.

Хальхи вăхăтра районти мĕнпур хуçалăхсен тĕп усадьбисене лайăх çулпа çыхăнтарнă, нумай хуçалăха автобуссем çÿреççĕ. Турханта, Ксыл Чишмара, Тури Туçара Культура çурчĕсем. Аслă Чеменре ясли-сад тума тытăннă. Тутар Сăкăтĕнче 140 вырăнлă, Ишпĕре 50 вырăнлă, Çĕнĕ Ахпÿртре 95 вырăнлă сад-яслисем ĕçе кĕртнĕ.

В. АБДУЛКИН,
халăх депутачĕсен Патăрьел район Совечĕн ĕçтăвкомĕн председателĕ.

«Усăсăр пĕтет»

Çак ятпа пичетленнĕ критикăлла статьяна районти агропромышленность пĕрлешĕвĕ, халăх контроль комитечĕпе прокуратура çитменлĕхсене тивĕçлĕ хак панă. Удобренисене упрама кирлĕ мерăсем йышăнманшăн тата складсем тума васкаманшăн халăх контроль комитечĕ «Карабашский» совхоз директорне П. И. Иванова выговор панă, тăкака саплас шутпа унăн пĕр уйăхри ĕç укçине тытса юлма йышăннă.

Удобренисене хуçасăрла тыткаланăшăн, агропромышленность пĕрлешĕвĕн приказĕпе, «Бичуринский» совхоз директорне Спиридонова ответ тыттарнă, унăн çур уйăхри ĕç укçине тытса юлмалла тунă. Совхозăн тĕп агрономне П. Г. Данилова тата Ю. В. Васильев бригадира дисциплинарлă майпа айăпланă. Район прокурорĕ «Звезда» совхоз директорне С. Г. Григорьева, «Дружба» совхозăн тĕп агрономне И. В. Кузьмина закона пăсма юраманни пирки асăрхаттарнă.

Минералла удобренисене йĕркеллĕ упрас тĕллевпе хуçалăхсенче çĕнĕ складсем тума палăртаççĕ. Кăçал «Бичуринский», «Дубовский» совхозсенче типлă проектпа складсем лартмалла. Вунвиççĕмĕш пилĕкçуллăхра тата виçĕ хуçалăхра 600 тонна удобрени хумалăх складсем ĕçе кĕртмелле.

Г. БЕЛОВ,
Сĕнтĕрвăрри районĕнчи агропромышленность пĕрлешĕвĕн председателĕ.

«Пулăшу кирлĕ»

Вăрмар райĕçтăвкомĕ çакна пĕлтерет: хаçатра пичетленнĕ «Пулăшу кирлĕ» статьяна районти хуçалăхсен руководителĕсен канашлăвĕнче сÿтсе явнă.

Иртнĕ çулхи вунă уйăхра районти ĕçсыннисене 10.380 сысна çури сутнă, ку вăл унччченхи çулхинчен 4 процент нумайрах. Районти хуçалăхсем халăхран выльăх-чĕрлĕх тата сĕт сутăн илессине ÿстерчĕç, ялта пурăнакансене çамрăк выльăхсемпе тивĕçтерсе тăрассине лайăхлатрĕç. Пĕлтĕр, сăмахран, 500 пуç пăру, 63 ĕне, 349 пин кайăк-кĕшĕк сутнă. Кунсăр пуçне уйрăм хуçалăхсенче самăртма 792 ĕне выльăх, 1.216 сысна уйăрса панă. 1989 çулта, 1988 çулхипе танлаштарсан, утă 25 процент, улăм — 89, тымарçимĕç — 8, тырă 14 процент нумайрах уйăрнă.

Район Совечĕн ĕçтăвкомĕ килти хушма хуçалăха аталантарма çĕнĕрен мерăсем йышăнать.

Н. ДМИТРИЕВА.
Вăрмар район Совечĕн ĕçтăвкомĕн председателĕ.

«Сывлӑх» программа

СӲТСЕ ЯВНИПЕХ ҪЫРЛАХНӐ

КПСС XXVII съезчӗ социаллӑ пурнӑҫа тӗпрен ҫӗнетсе улӑштарас тӗллевпе анлӑ программа палӑртрӗ. Ӑна пурнӑҫласа, Элӗк районӗнче «Сывлӑх» программа туса хатӗрленӗ. Вӑл виҫҫӗмӗш ҫул ӗҫлет. Ҫавӑн хыҫҫӑн 100 вырӑнлӑ стационара, районти аптекӑна хута янӑ, хирурги уйрӑмӗ пулнӑ ҫурта тӗпрен юсаса, ача ҫуратмалли уйрӑм тунӑ, ытти уйрӑмсен корпусӗсене тӗпрен юсанӑ, фельдшер пункчӗн 2 ҫуртне, участокри больницӑпа врач амбулаторийӗ ҫумӗнчи аптекӑсене, ялсенче 3 амбулатори туса лартнӑ, фермӑсенче 7 медпрофилактори ӗҫлет. Элӗкри вӑтам шкул ҫумӗнче ача-пӑчапа ҫамрӑксен спорт шкулне уҫнӑ.

Юлашки ҫулсенче медицина пулӑшӑвне аталантарасси ҫине тимлӗ пӑхни палӑрать. Поликлиникӑра 30 вырӑнлӑ кардиологи уйрӑмӗпе кабинечӗ, 10 вырӑнлӑ травматологи уйрӑмӗ, ялсенчи амбулаторисенче, фельдшерпа акушер пункчӗсем, Кӗҫӗн Тӑвантри вӑтам шкулта стоматологи кабинечӗсем уҫнӑ.

Ача ҫураласси 2 процент ӳснӗ, ӗҫлеме пултаракансем вилесси 19 процент, чирлесе вӑхӑтлӑха ӗҫлеме пултарайманнисем 6,2 процент чакнӑ.

Районта 10 пин ҫын пуҫне 14,9 врач, вӑтам пӗлӳллӗ медработниксем 91,9, 144,3 койка тивет.

Васкавлӑ пулӑшу ӗҫӗ лайӑхланнӑ. Икӗ ҫӗрте васкавлӑ медицина пулӑшӑвӗн участокӗсене уҫнӑ.

Колхозсемпе совхозсенче ҫынсен ӗҫ условийӗсене лайӑхлатма хӑшпӗр ӗҫсем тӑваҫҫӗ. 468 вырӑнлӑх гардеробсем, 49 вырӑнлӑх душевойсем, 2 прачечнӑй, 329 вырӑнлӑх столовӑйсем, 7 сауна, 7 медпрофилактори, 11 буфет, 55 кану пӳлӗмӗ, ӗҫ тумтирӗ типӗтмелли 10 установка пур. Малтанхи вӑхӑтра саунӑсемпе кану пӳлӗмӗсем йӗркеллех ӗҫлетчӗҫ. Халӗ вӗсем хӑйсен пӗлтерӗшне ҫухатса пыраҫҫӗ. Чылай ҫӗрте душевойсемпе саунӑсем тӗрлӗрен ӑпӑр-тапӑрпа тулса ларнӑ. Кун пеккипе «Яргунькинский», «Аликовский» совхозсенчи, «Правда», «Таутово» колхозсенчи фермӑсенче курма пулать. Кирек хӑш фермӑна пырса кӗр — тӳрех хӗрлӗ кӗтессемпе кану пӳлӗмӗсенче таса мар тумтирпе атӑ-пушмака, ҫӳп-ҫап купипе асӑрхатӑн. Ҫӗнӗ хаҫат-журнал ҫук.

РАПО совечӗпе отрасльти профсоюз райкомӗ, хуҫалӑхсен руководителӗсемпе профкомсем выльӑх-чӗрлӗх фермисемпе мехпаркӗсенче ӗҫлекенсем валли йӗркеллӗ условисем туса парас тесе тӑрӑшмаҫҫӗ мар. Ку ыйтупа 1988 ҫулхи июльте ятарласа постановлени йышӑннӑ. Унпа килӗшӳллӗн, кашни хуҫалӑхра 1988 — 1990 ҫулсенче выльӑх-чӗрлӗх пӑхакансемпе механизаторсен ҫурчӗсене тума, ахаль ларакан ҫуртсене социаллӑ-культурӑллӑ объектсем валли уйӑрма, ӗҫе икӗ сменӑпа йӗркелеме задани панӑ. Ҫак постановление пурнӑҫлассипе «Правда», «Звезда» колхозсенче, «Шуматовашский», «Выла» совхозсенче хӑшпӗр ӗҫсем туса ирттереҫҫӗ. «Молния», «Прогресс» колхозсенче, «Аликовская» строительство организацийӗнче, «Агропромхимия» пӗрлешӳре медпрофилакторисемпе саунӑсем тума тытӑннӑ. Ҫав хушӑрах Ульянов ячӗпе хисепленекен, «Волга» колхозсенче, «Сорминский» совхозра ӗҫҫыннисен ӗҫпе йӑла тата кану условийӗсене лайӑхлатас тесе нимех те тумаҫҫӗ.

Ял ҫыннисен сывлӑхне сыхлас, «Сывлӑх» программӑна пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе Ульянов ячӗпе, Калинин ячӗпе хисепленекен, «Динамо» колхозсенче, «Яргунькинский», «Питишевский» совхозсенче пысӑк ҫитменлӗхсем пур. «Аликовский» совхозра ача сачӗпе пурӑнмалли ҫурт-йӗр, «Сорминский» совхозпа «Таутово» колхозра суту-илӳ предприятийӗпе йӑла ҫурчӗ тӑвасси вӑраха тӑсӑлать.

Кӑҫал кашни хуҫалӑхрах ача сачӗсем пулмалла. Ҫак тӗллеве пурнӑҫлас тесен, вӗсене 11 хуҫалӑхра тумалла. «Яргунькинский», «Выла» совхозсен, Калинин ячӗпе хисепленекен, «Авангард» колхозсен ҫакна валли лайӑх майсем пулнӑ. Шел пулин те, ку хуҫалӑхсем вӗсемпе туллин усӑ курайман.

Халлӗхе районти хуҫалӑхсенче йывӑр ӗҫсене механизацилесси япӑх пырать. Уйрӑмах ку выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетнӗ ҫӗрте палӑрать. Ӗне выльӑх фермисенче шыв парассине 92 процент, апат валеҫессине 52 процент, тислӗк кӑларассине 64 процент ҫеҫ механизациленӗ. Сысна фермисене комплекслӑ механизацилесси те юлса пырать. Тӳрех калама, ку ыйтусемпе агропромышленность пӗрлешӗвӗн тата хуҫалӑхсен инженери службисем ытла та ҫаврӑнӑҫусӑр ӗҫлеҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра Ульянов ячӗпе хисепленекен колхозра ӗнесене пурне те (234 пуҫ), «Яргунькинский» совхозӑн Крымсарайкӑри фермине 130 ӗнене, «Сорминский» совхозӑн Чӑваш Сурӑмӗнчи фермине 50 ӗнене алӑпа сӑваҫҫӗ. Ульянов ячӗпе хисепленекен колхозра тислӗк кӑларассине пӗр фермӑра та механизацилемен, хӗл кунӗсенче вӗсенче шыв пӑрахӗсем ӗҫлемеҫҫӗ.

— Юлашки вӑхӑтра пирӗн ӗҫпе йӑла условийӗсем лайӑхланчӗҫ, — пӗлтерет РАПОн юсавпа техника предприятийӗн директорӗ К. К. Ефремов. — Предприятире 2 сауна, душевойсем пур. Котельнӑй реконструкцилени юнашарти ҫуртсене те, производство объекчӗсене те ӑшӑ шывпа тивӗҫтерме май пачӗ. Анчах шоферсем валли тумтир хывса тӑхӑнмалли пӳлӗм ҫук.

Кӗскен каласан, «Сывлӑх» программа вӑраххӑн пурнӑҫланса пырать. Районти тӗп больницӑра, акӑ, апат-ҫимӗҫ блокне ниепле те хута яраймаҫҫӗ. Врачсем хатӗрлесси ҫителӗксӗр пырать, хуҫалӑхсен шучӗпе ҫамрӑксене вӗренме ярасси пурнӑҫланмасть. Кадрсем тӑтӑшах улшӑнса тӑраҫҫӗ. 1986 ҫултанпа районтан 12 врач тухса кайнӑ. Ҫынсем ҫитменнипе тата пӳлӗмсем ҫуккипе водогрязелечебница, иглорефлексотерапи кабинечӗсене ӗҫе яраймаҫҫӗ.

Ҫынсен сывлӑхне сыхласси, ӗҫ, пурнӑҫ, кану, йӑла условийӗсене лайӑхлатасси — парти организацийӗсем, хуҫалӑхсемпе профкомсем пӗрле тумалли ӗҫ. Ку ыйтӑва КПСС райкомӗн бюровӗнче тата агропромышленность комплексӗнче ӗҫлекенсен профсоюз райкомӗн пленумӗнче те пӑхса тухрӗҫ. Апла пулсан, «Сывлӑх» программӑна пурнӑҫлама пӗтӗм вӑй хумалла.

В. ПАВЛОВ.

УРӐХ ҪӖРШЫВСЕНЧЕ

Калаҫусене малалла тӑсмалла

КПСС Центральнӑй Комитечӗн Генеральнӑй секретарӗ, СССР Верховнӑй Совечӗн Председателӗ М. С. Горбачев Литва ССРӗнче пулнин итогӗсене тӗнчери массӑлла информаци органӗсем малалла сӳтсе яваҫҫӗ. Урӑх ҫӗршывсенчи обозревательсем Литва ҫӗрӗ ҫинче совет халӑхӗн юлашки вунӑҫуллӑхсенчи пӗтӗм пурнӑҫне тӑран тишкерсе тухмалли процессем пуҫланнине палӑртаҫҫӗ. Хаҫатсем М. С. Горбачев Литвӑра каланӑ сӑмахсене пичетлесе кӑлараҫҫӗ, вӑл нацисене салатса ярас вырӑнне ССР Союзне сыхласа хӑварма кирли ҫинчен тӗплӗн ӗнентерсе каланӑ шухӑшсене илсе кӑтартаҫҫӗ. Литва ССРӗнчи дискуссисен итогӗсене хаҫатсем тӗрлӗ майлӑ хаклаҫҫӗ.

ЛОНДОН. «Санди таймс» хаҫат ҫапла шутлать: М. С. Горбачев Литвӑна кайса ҫӳрени ӑнӑҫлӑ пулчӗ, мӗншӗн тесен вӑл Литва никама пӑхӑнман государство пулса тӑрас ыйтӑва тӗплӗн шухӑшласа татса пама хатӗр пулнине кӑтартса пачӗ. Балтика тӑрӑхӗнчи ҫак республика ССР Союзӗнчен хӑвӑрт уйрӑлас пулсан унӑн умне мӗнле проблемӑсем тухса тӑма пултарассине палӑртса, хаҫат ҫапла ҫырать: «Виҫҫӗ миллион ҫын пурӑнакан республика Совет Союзӗнчен пӗтӗмӗшпех уйрӑлас пирки шухӑшласан хӗллехи ҫак сивӗ кун чун ҫӳҫенет».

ВАШИНГТОН. «М. С. Горбачев Литва никама пӑхӑнман государство пулса тӑмалли процесса чарса тӑрас тӗллевпе ҫак республикӑна кайса ҫӳрени ӑнӑҫлӑ е ӑнӑҫсӑр пулнине ҫитес уйӑхсем кӑна уҫӑмлӑн кӑтартса парӗҫ», — тесе ҫырать «Нью-Йорк таймс» хаҫатӑн Мускаври корреспонденчӗ.

«Вашингтон пост» хаҫатӑн редакци статйинче ҫапла каланӑ: «Результатсем мӗнле пуласси халлӗхе паллӑ мар пулин те, Горбачевӑн Литвари тӗлӗнмелле ҫаврӑнӑҫуллӑ ӗҫӗсем вӑл Совет Союзӗн авторитетлӑ представителӗ, Кремльти политика тӗлӗшӗнчен пысӑк ӑслӑ пӗртен-пӗр деятель пулнине, ССР Союзӗн малашлӑхӗ мӗнле пулассине уҫӑмлӑ курса тӑнине ҫирӗплетсе пачӗҫ».

ПАРИЖ. «М. С. Горбачев Литвӑра пулнӑ вӑхӑтра юлашки самантченех литовецсене хӑйӗн тезисӗсем тӗрӗс пулнине ӗнентермешкӗн мӗн тума май пуррине пӗтӗмпех турӗ, — тенӗ «Антенн-2» телепрограмма обозревателӗ. — Вӑл литовецсене ССР Союзӗнче тата ҫӗнетӳ ҫулӗ ҫинче май килнӗ таран ытларах ирӗклӗх пама кирлине палӑртрӗ».

ТОКИО. Совет Союзӗ хӑйӗн наци ыйтӑвӗсене хӑй татса пама тивӗҫлӗ пулнине палӑртса, «Майнити» хаҫат ССР Союзне Литвӑра тухса тӑнӑ проблемӑсем тӗлӗшпе васкавлӑ решенисем йышӑнасран сыхланма чӗнет. «ССР Верховнӑй Совечӗн Председателӗн М. С. Горбачевӑн тата совет ҫыннисен нимӗнле йывӑрлӑха пӑхмасӑр калаҫӑва малалла тӑсма тата ҫынсене политикӑллӑ меслетсемпе усӑ курса ӳкӗте кӗртме малашне те пысӑк вӑй хурса кӗрешмелле», — тесе ҫырать «Асахи» хаҫат.

(ТАСС).

«КУҪ УМӖНЧЕН ТАСАЛТӐР...»

Ҫакӑн пек кассе татрӗ хӗрлӗ кӗтесе пухӑннисенчен пӗри, пурте шавласа калаҫма тытӑнсан.

— Мӗн чухлӗ калаҫмалла тата! Ҫитет, тек ура та ярса пусмастӑп пуху таврашне. Вӗҫӗ пулмалла ку ыйтӑвӑн.

Ыйтӑвӗ вара, чӑннипех те, пӑшӑрхантараканскер, шухӑша яраканскер: пӗччен ҫын коллектив умӗнче мӗнпе айӑпа кӗнӗ-ха!

Ҫулталӑк вӗҫӗнче редакци Муркаш районӗнчи «Передовик» совхозӑн Хачӑк Салинчи сӗт-ҫу фермичче ӗҫлекенсен пӗр ушкӑнӗ алӑ пуснӑ ҫакӑн пек ҫыру илчӗ:

«Пирӗн фермӑра августра Мария Семеновна Андреева ӗҫлеме пуҫларӗ. Ӑна пушмак пӑрусен ушкӑнне пачӗҫ. Хӑйӗн ӗҫне йӗркеллех туса пычӗ. Анчах та коллективра хирӗҫӳ тухма пуҫларӗ. Каярахпа, уҫӑмлӑн ларса калаҫсан, ҫака палӑрчӗ: вӑрҫтараканни вӑл пулнӑ. Ун хыҫҫӑн вӑл ӑнланчӗ пулмалла, пурте лӑпланса ӗҫе тытӑнчӗҫ. Сентябрьте унӑн ӗнисем пӑрулама пуҫларӗҫ. Вӑл ир те, каҫ та банкӑпа сӗт киле илсе кайма пуҫларӗ. Каласан та, ҫаплипех ҫӗмлерӗ. Ноябрӗн 18-мӗшӗнче ирхине ферма заведующийӗ Роза Петровна Мостова малтан курчӗ сӗт тултарнине, банкине кабинета кӗртсе лартрӗ. Ҫав вӑхӑтра М. Андреева пырса кӗнӗ, банкине тӑпӑлтарса илсе, сӗтне урама кӑларса тӑкрӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн коллектив пуху пухрӗ. Унта партком секретарӗ Р. М. Карпова пулчӗ. Пухура М. Андреева хӑйӗн айӑпне йышӑнмарӗ, коллектив ӑна ӗҫрен кӑларас тесе сасӑларӗ».

мӗн каласшӑн, тӗрӗсех-и ҫака? Ҫук, чылайӑшӗ куҫне тартать, теприсем пуҫне чикеҫҫӗ, виҫҫӗмӗшӗсен маншӑн пурпӗрех текен сӑн-пит. Мӗн ку, куҫран ӳкесрен хӑрани-и е айккинче юлма тӑрӑшни? Шавлакаласа илчӗҫ пулин те уҫҫӑн калас текенсемех пулмарӗҫ.

— Ӑнланӑр-ха юлташсем, тӗрӗс тумастпӑр эпир. Мӗншӗн тата куҫран калама хӑраса тӑрататӑр? — тӳсеймен сине сиксе тӑрать главнӑй зоотехник Галина Леонидовна Миронова. — Андреевӑн ӗҫне хак парас чух мӗн ҫинчен калаҫатпӑр. Кирек епле [illegible] та йӗркене тумаллаҫке. Ӗҫӗ, тӗрӗссипе, сӗт вӑрлама тӑнинче мар. Килӗшмест сире Андреева, пӗр чӗлхе тупма тӑрӑшманнишӗн, куҫран калама хӑрамаршӑн килӗшмест. Пӗркелле ларутӑру туса хурас вырӑнне секретарӗн ыйтӑва ҫакӑн пек тӳррӗн лартма.

М. Андреева ӑнлантарса панине шута илесшӗн пулмарӗ пуху. Чӑннипех те вӑл сӗт вӑрланӑ-и? Унччен те ҫакӑн пекки пулнӑ-и? Ӑнланать-и вӑл хӑйӗн йӑнӑшне? Пулмарӗ ҫакӑн ҫинчен сӑмах.

«Андреевӑна ӗҫрен кӑларасси пирки сасӑлас, вӑрттӑн сасӑлас», — сӗнет президиум. Ҫавӑн пек тӑваҫҫӗ те. Вӑрттӑн сасӑласа пухӑннисенчен чылайӑшӗ М. Андреевӑна ӗҫрен кӑлармалла тесе йышӑнать, Р. Мостовӑна заведующирех хӑварас, теҫҫӗ.

Ҫынна, вӑл йӑнӑшать пулсан, тӳрлетес, такӑнать пулсан, пулӑшас чух ытла та ҫӑмӑллӑн татса параҫҫӗ-ҫке — ӗҫрен кӑлармалла.

Ҫук-ха, пӗр сасӑн тени тӗрӗс мар. Иккӗленекен, чун хушнӑ пек тума тӑрӑшакан, хаюлӑх ҫитерекен ҫын та пулчӗ — Галина Казакова осеменатор:

«Мӗншӗн ҫавӑн пекех пустармалла ҫынна? Япӑх, япӑх», тетӗр. Енчен те пур «япӑхсене» ӗҫрен кӑларса ярса пырсан, вӗсен ӑста кай-

Фермӑна куҫма, выльӑхсен кӗтӗвне йышӑнма та хӑех сӗннӗ вӗт Роза Петровна. Ҫын ҫук вӑхӑтра ҫак ӗҫе килнӗшӗн сахал мар тав туса, ырласа калаҫнӑ вӑл.

Унччен ача садӗнче ӗҫленӗскер, Мария Семеновна ҫак йывӑр ӗҫе ҫӑмӑллине шыраса пыман, укҫи-тенки пирки те шухӑшлама тивнӗ, машӑрӗпе пӗр ӗҫре пулас, ӑна хӑй «ытла таса ӗҫре» кӑна мар, ҫаканта та ӗҫлеме пултарнине ӗнентерес тени те пулнӑ ӑшра. Ыттисем ӗҫленине пӑхса, сӑнаса, вӗренме тӑрӑшнӑ. Ӗнесем пӑрулана вӑхӑтра ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр тенӗ пек фермӑран тухманни те пулнӑ. Ҫапах та тахӑш вӑхӑтра заведующипе доярка хушшинче хура кушак чупса иртнех.

Йывӑр япала хирӗҫӳллӗ енсене итлесси, ӑнланасси, пулӑшасси. Хӗрхенес те, вӑхӑт-вӑхӑтпа хыттӑнах калас та килет. Анчах тарӑна кайнӑ ҫак хирӗҫӳвӗн вӗҫне-хӗрне аякран килнӗ ҫыннӑн мар, хӑйсеннех татса пама тӑрӑшмалла пулӗ.

Руководителӗн, вӑл кирек хӑш сыпӑкра ӗҫлет пулсан та, ыттисемшӗн тӗслӗх пулмалла, коллектива таса та тӗрӗс ҫулпа илсе пымалла. Илтнӗ сӑмаха, тепӗр чух вӑл хытах кӳрентерет пулсан та, ҫынсене калас вырӑнне ӑшра хӑварсан, теприсен хивре сӑмахне ҫирӗппӗн пӳлсен, тавлашу вӑй илмест, пӑтрашу та пулмасть. Ҫук ҫав, кӑмӑл ҫирӗплӗхне кӑтартас чух заведующи те ҫав тумхахлӑ ҫулпах кайни хутшӑнусен салӑхне пӑснӑ.

Килӗшсех пулать М. Андреева кӑмӑлӗ те пирӗн

ДОКУМЕНТСЕМПЕ МАТЕРИАЛСЕМ

«М. С. Горбачевӑн Италире тата Ватиканри визичӗсем, 1989 ҫулхи ноябрӗн 29-мӗшӗ — декабрӗн 1-мӗшӗ: документсемпе материалсем» брошюра пичетленсе тухнӑ.

Унта Совет Союзӗпе Итали хушшинчи калаҫусем, икӗ енлӗ документсемпе пӗрлехи декларации ҫине алӑ пусни, совет руководителӗ Италири ӗҫлӗ ушкӑнсемпе финанс ушкӑнӗсен представителӗсемпе тӗл пулни ҫинчен отчетсем. М. С. Горбачев Ватиканра тухса калаҫни, ытти документсемпе материалсем кӗнӗ.

(ТАСС).

КОМПОЗИТОРСЕН СЪЕЗЧӖ ВӖҪЛЕННӖ

Январӗн 15-мӗшӗнче Мускавра РСФСР композиторӗсен VI съезчӗ вӗҫленнӗ. Унта хутшӑннисем творчество союзӗн иртнӗ пилӗкҫуллӑхри мӗнле ӗҫленине тата унӑн малашлӑхӗсене сӳтсе явнӑ, организаци Уставне йышӑннӑ, РСФСР Композиторсен союзӗн ӗҫлекен органӗсене суйланӑ.

Правлени председательне пӗрремӗш хут альтернативлӑ кандидатсенчен тӳрремӗн суйланӑ. Вӑрттӑн сасӑласа, творчество союзӗн руководителӗ пулма В. Казенина суйланӑ.

Парти конференцийӗн итогӗсем

БЕРЛИН, январӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Кунта Демократиллӗ Германи Республикинчи социал-демократсен конференцине ирттернӗ. Социал-демократсем нумай решенисем йышӑннӑ. Ҫав шутра партин ҫӗнӗ ячӗшӗн сасӑланӑ. Малашне парти ячӗ ҫапла пулать: Германири социал-демократсен партийӗ (СДПГ). Парти пирвайхи утӑмсем ҫеҫ тӑвать-ха. Ӑна пӗлтӗрхи октябрӗн 7-мӗшӗнче туса хунӑ. Хальхи вӑхӑтра парти членӗсен йышӗ 32 пин ҫынна ҫитнӗ.

Парти ҫӗршыври влаҫа хӑйӗн аллине илме шутлать, мӗншӗн тесен вӑл влаҫпа унран лайӑхрах усӑ курма пултаракан вӑй урӑх ҫук, тесе шутлать. СДПГ йӗркеленсе, ҫирӗпленсе ҫитмелли процесс вӗҫленмен-ха. Анчах чи кирлӗ хӑшпӗр ыйтусем тӗлӗшпе парти хӑйӗн позицийӗсене палӑртнӑ ӗнтӗ. Парти заявленийӗнче ҫапла каланӑ: социал-демократсем нимӗҫ нацийӗн пӗрлӗхӗшӗн кӗрешеҫҫӗ, вӗсен тӗллевӗ пӗрлӗхлӗ Германи туса хурасси пулса тӑрать. Анчах ҫак процесс пӗтӗм Европари процесспа тача ҫыхӑнмалла, ӑна кӳршӗ государствӑсемпе килӗшсе пурнӑҫа кӗртсе пымалла. Кӳршӗ государствӑсен чиккисем пирӗншӗн никам пултекӗнейми ҫирӗп чиккӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Эпир мирпе хӑрушсӑрлӑха ҫирӗплетме тӑрӑшатпӑр, тенӗ документра.

Суту-илӗве аталантарассишӗн

ТОКИО. (ТАСС). Кӑнтӑр Корея Демократиллӗ Корея Халӑх Республикипе тӳрремӗнех суту-илӳ тӑвассине аталантарассишӗн кӗрешет. Ҫакӑн ҫинчен Кӑнтӑр Корея правительствин пысӑк вырӑнта ӗҫлекен представителӗ пӗлтернӗ. Пытармалли ҫук ӗнтӗ, хальхи вӑхӑтра икӗ ҫӗршыв хушшинчи пысӑк мар суту-илӳ виҫҫӗмӗш государствӑсем урлӑ, уйрӑммӑн илсен, Японипе Гонконг урлӑ аталанса пырать, тенӗ вӑл. Пирӗн шутпа, ҫак меслете парахӑҫламалла та икӗ ҫӗршыв хушшинче ӗҫлӗ ҫыхӑнусем йӗркелесе ямалла. Кӑнтӑр Корея правительстви ҫакна ҫынсем пӗр-пӗринпе ҫыхӑну тытассине аталантармалли ҫул ҫинчи паллӑ тапхӑр, экономикӑна аталантарма икӗ енӗ те укҫа хывмалли лайӑх меслет вырӑнне хурать.

Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин валюта сахал пулнине шута илсе, Кӑнтӑр Корея унӑн таварӗсене пысӑк хакпа туянма, хӑйӗн продукцине ӑна чылай йӳнӗрех хакпа сутма хатӗр, тенӗ Кӑнтӑр Корейӑн министрсен кабинечӗн представителӗ. Уйрӑм ҫынсен аллинчи компанисене эпир суту-илӳ йывӑрлӑхӗсене пӗтермешкӗн ятарлӑ фондран пулӑшма хатӗр. Ҫав фонда эпир Ҫурҫӗрпе Кӑнтӑр килӗштерсе ӗҫлессине йӗркелесе ямашкӑн пулӑшма туса хунӑ. Хальхи вӑхӑтра Кӑнтӑр Корейӑпа КНДР 21,5 миллион долларлӑх суту-илӳ тӑваҫҫӗ.

ПАП агентстви пӗлтерни

КӖСКЕН ТЕМТЕПӖР

Кушак-наркоман

ЛОНДОН. Килти выльӑх-чӗрлӗх ҫулсем иртнӗҫемӗн хӑйӗн хуҫи пек пулса каять, теҫҫӗ.

Голландири Лауверсзийль поселокӗнче пурӑнакан пӗр кушак 7 ҫул хушшинче наркотиксене хӑнӑхса ҫитнӗ. Унӑн хуҫи пуҫа минретекен ҫак хӑрушӑ наркотика пӗччен йышӑнма хӑнӑхман пулмалла. Вӑл хӑйӗн юратнӑ кушакне те пӗчӗкшерӗн укол туса пынӑ. Кушак часах наркотика хӑнӑхнӑ, унтан вара кунсерен хӑйӗн порцине ыйтма тытӑннӑ. Кӳршӗсем ҫак чӗрчун тайкаланса утнине, унӑн куҫӗсем вут-хӗмпе ҫуннине асӑрханӑ, ҫакӑн ҫинчен килти чӗрчунсене сыхлакан обществӑн вырӑнти уйрӑмне пӗлтернӗ. Унти сотрудниксем наркотикпа минренӗ кушака тытма, унтан вара выльӑх-чӗрлӗхе сиплекен тухтӑрсем патне ӑсатма нумай вӑй хунӑ.

Чылай вӑхӑт хушши «ирӗксӗрлесе сыватнӑ хыҫҫӑн» Стаффи кушак сывалма тытӑннӑ, кӑштах самӑрӑлнӑ та.

Хӗрӗх ҫул иртсен

ДЖАКАРТА. ... Раджа тата унӑн ҫар начальникӗсем тусем ҫинчен аннӑ. Вӗсем ҫинче ҫар ҫи-пуҫӗ пулнӑ, ҫавӑн пекех ку ушкӑн хӗҫсемпе тата сӑнӑсемпе хӗҫпӑшалланнӑ. Ҫӗршывӑн юлашки феодал-пуҫлӑхӗн подданнӑйӗсем 40 ҫул ытла Индонезин Ачех провинцийӗнчи никам пырса кӗмен вӑрманӗсенче пытанса пурӑннӑ. Ку вӑл Суматра ҫурутравӗн ҫурҫӗр пайӗ. Ҫак кунсенче ҫеҫ вӗсем хӑйсен ӗмӗрхи вырӑнӗсене таврӑннӑ, анчах кунта Индонезин тахҫанах ӗнтӗ Голланди колонийӗ пулманнине пӗлнӗ.

Коллектив тата этем чысĕ

пи Муркаш районĕнчи «Передовик» совхозăн Хачăк Салинчи сĕт-çу фермиче ĕçлекенсен пĕр ушкăнĕ алă пуснă çакăн пек çыру илчĕ:

«Пирĕн фермăра августра Мария Семеновна Андреева ĕçлеме пуçларĕ. Ана пушмак пăрусен ушкăнне пачĕç. Хăйĕн ĕçне йĕркеллĕ туса пычĕ. Анчах та коллективра хирĕçӳ тухма пуçларĕ. Каярахпа, уçăмлăн ларса калаçсан, çакă паларчĕ: вăрçтараканни вăл пулнă. Ун хыççăн вăл ăнланчĕ пулмалла, пурте лăпланса ĕçе тытăнчĕ.

Сентябрьте унăн ĕнисем пăрулама пуçларĕç. Вăл ир те, каç та банкăпа сĕт киле илсе кайма пуçларĕ. Каласан та, çаплипех сĕклерĕ. Ноябрĕн 18-мĕшĕнче ирхине ферма заведующийĕ Роза Петровна Мостова каллех нурчĕ сĕт тултарнине, банкине кабинета кĕртсе лартрĕ. Çав вăхăтра М. Андреева пырса кĕчĕ, банкине тăпăлтарса илсе, сĕтне урама кăларса такрĕ. Çакăн хыççăн коллектив пуху пухрĕ. Унта партком секретарĕ Р. М. Карпова пулчĕ. Пухура М. Андреева хăйĕн йăнăшне йышăнмарĕ, коллектив ăна ĕçрен кăларас тесе сасăларĕ.

М. Андреева çакăнпа килĕшмерĕ. Çакăн хыççăн тепĕр пухăва совхоз директорĕ Мерловпа Миронова главнăй зоотехник килчĕç, коллектив решенийĕпе килĕшмесĕр, Андреевăна хăйĕн вырăнĕнчех хăварма сĕнчĕç.

Халĕ заведующие — Мостована ĕçрен кăларчĕç, калаçса татăлмасăрах. Эпир çакăнпа килĕшместпĕр. Директорпа главнăй зоотехник А. Даниловăна заведующие лартасшăн, пире вăл кирлĕ мар. Эпир хирĕç».

Хăçата кăна мар, профсоюз обкомне те çакăн пек çыру çитернĕ, унтан та представитель кĕтет заведующи. Пухусен протоколĕпе паллашнă хыççăн коллектив шухăшне итлесе пăхма шутларăм: пĕрлехи калаçура çак ыйтăвăн тупсăмĕ лайăххăн паларĕ-и: ытлашши хĕрӳленнĕ самантра васкавлă йышăннă решенисене хăйсемех хальхинче тĕрĕслесех татса памĕç-и? Кĕçех совхоз директорĕпе партком секретарĕ, главнăй зоотехник та çитрĕç. Коллектив хутшăнăвĕсем вĕсене те пăшăрхантараççĕ, унччен чыс-хисеп илнĕ, яланах малта пынă коллективра харкашу-тавлашу пуçланни ĕçре те сисĕнме пуçланă.

Уçăмлă, вырăнлă, татăклă калаçу пуласса кĕтрĕм çынсенчен. Анчах пуçламăшĕнченех пуху хатĕр сценарипе лартнă пьеса евĕр, пĕр енлĕн иртсе пычĕ. Пуху президиумĕн председателĕ Роза Петровна Мостова (пĕлеймерĕм, мĕншĕн унччен икĕ пухăвĕнче те вăлах председатель пулса иртсе пынă) тӳрех малтанхи протоколсене вулама тытăнчĕ.

«Тен, мĕн тĕллевпе пухăнни, пухуран мĕн кĕтнине сăмах вĕççĕн каласан вырăнлăрах пулĕ», — сĕнеççĕ хăшĕсем.

Çук, килĕшмест Роза Петровна. Протоколсене вуласа пĕтернĕ хыççăнах М. С. Андреевăна ĕçрен кăларттармашкăн сасăлама сĕнет вăл.

— Ăçта вара çынсен шухăшĕ, хушса каланисем? Çынсене сăмах памаллах, — сĕнеççĕ каллех вырăнтан.

— Юрать,— килĕшет пуху председателĕ. — Хам калатăп.

Мана, аякран килнĕ çынна та итлеме çăмăлах, аванах пулмарĕ çиллес сăмахсене витрери шыв пек тăкнине. «Сĕт вăрлама» тăнишĕн, ăна айăпласси пирки мар, Мария Семеновна хăçан, кам çинчен мĕнле-мĕнле сăмахсем калани пирки тăрăху сăмахĕсем пулчĕç Роза Петровнăн.

Ларакансем сине тинкеретĕп: вĕсем мĕн шутлаççĕ, тартать, теприсем пуçне чикеççĕ, виççĕмĕшсен манпан пурнĕрех текен сан-пит. Мĕн-ку, кусран ӳкесрен хăрани-и е айккинче юлма тăрăшни? Шаплакаласа илчĕç пулин те уççăн калас текенсем пулмарĕç.

— Анлăпăр-ха юлташсем, тĕрĕс тумастпăр эпир. Мĕншĕн-тата кусран калама хăратăр? — тӳсеймен сине сиксе тăрать главнăй зоотехник Галина Леонидовна Миронова. — Андреевăн ĕçне хак парас чух мĕн çинчен калаçатпăр. Кирек епле япалана та йĕркепе тумалла-çке. Ĕçĕ, тĕрĕссипе, сĕт вăрлама тăнинче мар. Килĕшмест сире Андреева, пĕр чĕлхе тупма тăрăшманнишĕн, кусран калама хăраманшăн килĕшмест. Пĕркеллĕ лару-тăру туса хурас вырăнне эсир, Роза Петровна, çынсене хирĕçтеретĕр. Куракать вет, çакă пĕтĕмпех эсир пуçарнă япала...

— Ĕçрен хама кăларассипе килĕшместĕп, ака унччен заявлени таварса пама ыйтса çырни, — пулет ăна Роза Петровна, директор умне заявлени пырса хурать. — Халех татса парăр, Андреевăна ĕçрен кăларасси пирки те, мана ĕçре хăвармалли çуккине те.

Совхоз директорĕ Вячеслав Михайлович Мерлов сăмах илчĕ:

— Аставатăр-и, Роза Петровна, эпир иртнинче зоотехникпа фермăна килсен, хăварах манан ĕç пулсах çитеймест, ачасем те вакрах, ĕçлеме йывăр, сĕт йышăнма кусарăр тесе ыйтрăр. Хирĕçлемерĕмĕр ун чухне, килĕшрĕмĕр. Кайран йышăну актне çырнă хыççăн тепĕр кун мĕн пулчĕ сире, ăнланма çук, кăшкăрашма пуçларăр. Мĕншĕн уçăмлăн каламастăр. Ĕç тени вăйă мар, тивĕçе пурнăçласа пымалла. Хĕрсех ĕçлес чух пĕр-пĕрне тĕмен те пĕр калаçа кӳрентеретĕр. Коллектив ĕçĕнче диктат тени пулмалла мар. Халлĕхе вара сирĕн çакă ытларах палăрать. Ĕçлеме кăмăл пур пулсан, эпир нихçан та хирĕç мар.

Сĕт вăрлама тăнă тетĕр. Мĕншĕн ăна акт çырса палăртман, асăрхаттарман? Пĕрке пулмаллах. Профсоюз комитечĕн шухăшĕсене мĕншĕн шута илместĕр? Туйсах тăратăп, пĕр-перинпе килĕштермен пиркиех хирĕçӳре эсир коллектив витĕмĕпе çĕнтересшĕн.

Партком секретарĕн Р. М. Карпован сăмахĕсем çивĕч пулчĕç.

— Кĕреçе, сенĕк тытса ĕçлес чух тĕрлĕ сăмахсене пухса пĕр-пĕрне хирĕçтерни коллектива аркатать, юхăнтарать ĕçе. Андреевăна вăл сĕт илме тăнине алăранах тытнă пулсан, приказ çырсах ĕçрен кăлармалла.

Çапла, парти организацийĕн секретарĕн çынсемпе ĕçлесси, вĕсене тĕрĕс çул-йĕрпе илсе пырасси тĕп вырăнта пулмалла. Анчах хальхинче сăмах парти членĕ, вăл Устава пăсни е коммуниста тивĕççĕр пĕр-пĕр ĕç туни çинчен пымасть-çке. Е урăх сăлтавсем пулчĕç-ши

расси пирки сасăлас, вăрттăн сасăлас», — сĕнет президиум. Çавăн пек таваççĕ те. Вăрттăн сасăласа пухăннисенчен чылайăшĕ М. Андреевăна ĕçрен кăлармалла тесе йышăнать, Р. Мостована заведующирех хăварас, теççĕ.

Çынни, вăл йăнăшать пулсан, тӳрлетес, такăнать пулсан, пулăшас чух ытла та çăмаллăн татса парасçĕ-çке — ĕçрен кăлармалла.

Çук-ха, пĕр саслăн тени тĕрĕс мар. Иккĕленекен, чун хушнă пек тума тăрăшакан, хăюллăх çитерекен çын та пулчĕ — Галина Казакова осеменатор:

«Мĕншĕн çавăн пекех путармалла çынна? Япăх, япăх», тетĕр. Енчен те пур «япăххисене» ĕçрен кăларса ирса пырсан, вĕсен ăста каймалла? Тĕрĕс решени тесе шутламастăп эпĕ».

Шел, чĕререн каланă çак сăмахсем нихăшне те пырса тивмерĕç.

Пурнăç сулĕ тикĕс мар. Кам пĕлет, çакăн пекки кашнинех пулма та пултарĕ. Анчах кам ал тăсса парĕ ун чух? Мĕншĕн тата çынна сӳтсе явнă чух унăн хура енĕсене кăна курма пăхатпăр, ун шухăшĕсене, сăмахĕсене шута илместпĕр. Тĕрĕс мар çакă. Çавăнпа «айăпланнă» енне те итлес терĕм.

— Вăрă ятне илтрĕм-çке, ăратра та пулман пирĕн вăрласси, — шăпăртатса анать Мария Семеновнăн куççулĕ. — Совеç таса. Вăрлас тесе тунă япала çапла пулать-и? Пĕлсех тăратăп, Роза Петровна çулĕ урлă каçрăм эпĕ, çавăнпа усал пулса юлтăм. Пĕркипе илсен, ĕçĕ çапла пулчĕ. Упăшкам кунтах, кочегарта, çăнăх авăртнă çĕрте ĕçлерĕ (нумаях пулмасть çак пăтăрмахсене тӳсеймесĕр ĕçрен тухрĕ вăл). Сывлăхпăн сиенлĕ ĕç тесе сĕт памаллачĕ ăна талонпа. Анчах килте ĕне пуртан илмен унччен сĕт. Сума пăрахсан, малашне совхозран сĕт çыртарса илме тытăнатпăр терĕмĕр. Унччен нихçан та пĕр стакан сĕт те илсе кайман эпĕ, ăна пурте пĕлеççĕ. Çырура мĕншĕн суйса çырнă, ăнланмастăп.

Курăннă сĕрех тултарса лартрăм банкăна, сĕт йышăнакана каласах. Каярахпа, ĕççене пуçтарнă вăхăтра, Роза Петровна камăн сĕчĕ тесе ыйтсан, манăн терĕм, васкаварăн ăнлантарса та параймарăм. Унта-кунта ăшталанса сӳреннипе манăн сĕт савăчĕ çухалнине те сисмен. Кайран доярккăсем заведующи сĕклесе кайрĕ тесен, чĕре йăштах турĕ, ку япалана юриех тунине ăнлантăм. Мĕншĕн тесен, урлă калаçасси унччен пулнăччĕ, ун пеккине заведующи каçармастех. Ăнлантарма кĕтĕм кабинета. Роза Петровна сăвар уçма та памасть, шутсăр йывăр сăмахсемпе вăрса пуçларĕ, алă сĕклерĕ. Эпĕ йывăр çын, сапса кăвакартсассăн, милицие пĕлтеретĕп тесен кăна чарăнчĕ.

Тĕрĕссипе, унччен юлташлă пулнă, каярахпа тăшман пулса тăнă çынсен хушшине кĕме те пĕлес çук темелле.

енсене итлесси, ăнланасси, пулăшасси. Хĕрхенес те, вăхăт-вăхăтпа хытăнах калас та килет. Анчах тарăна кайнă çак хирĕçĕвĕн вĕçне-хĕрне алкран килнĕ çынпа мар, хăйсенех татса пама тăрăшмалла пулĕ.

Руководителĕн, вăл кирек хăш сыпăкра ĕçлет пулсан та, ыттисемшĕн тĕслĕх пулмалла, коллектива таса та тĕрĕс

Илтнĕ сăмаха, тепĕр чух вăл хытах кӳрентерет пулсан та, çынсене калаç вырăнне ăшрах хăварсан, теприсен хирĕçре сăмахне çирĕппĕн пӳлсен, тавлашу вăй илмест, пăтрашу та пулмасть. Çук çав, кăмăл çирĕплĕхне кăтартас чух заведующи те çав тумхахла çулпах кайни хутшăнусен тасалăхне пăснă.

Килĕшесех пулать М. Андреева камалĕ те пирешнийĕнех мар. Пĕркесерлехе курсан, чăтаймасть, кусран калать. Сасса хăпартса, вăйлатса каланипе пуç чиксе итлеме е шăппăн кăна айккалла пăрăнма тăрăшмасть. Кунта та асархаписене курмаш пулман. Мĕншĕн канмалли кунсем памастăр, мĕншĕн витери çĕрĕ урайсене юсама пулăшмастăр, унсăрăн выльăхсене кунне икĕ виçĕ хут тасатсан та вĕсем вараланчăк, йĕпе вырăнах выртаççĕ, çиллисем чирлеççĕ. Е тата концентрата мĕншĕн куç виçипех паратăр та ытти те? Сăмах май, çак ыйтусенех хускатма тăчĕ вăл пухура. Эппин çыннăн чунĕ хăйĕншĕн çеç мар, пĕрлехи ĕçшĕн те ыратать.

Хитре сăн-питлĕ, яштака пӳ-силлĕ çак икĕ çамрăк хĕрарăмпа пĕрле, юнашар ларсах калаçса пăхассăм килчĕ. Çук, килĕшӳ çулне суйласа илмерĕç курăнать, пулаймарĕ ун пек калаçу. Пĕр хуçалăхрах, пĕр урам, пĕр çул-сукмакпах сӳремелле-çке вĕсен. Пурнан пурнăçра пускил, ял-йыш аякри таванран та çывăхрах пулнине манмаллах-ши? Нивушлĕ пĕр-пĕрне асăрхасан, теприн урамăн тепĕр енне каçма васкĕ?

Юрĕ, «тасалĕ» тейĕпĕр Андреева фермăран. Хăй каланă пек, ферма еннелле пăхас та çук вăл. Анчах ун вырăнне фермăна пынă сĕнĕ çынпа та çавăн пек пулса тухмĕ-и, кам çирĕплетсе калама пултарĕ çакна?

Тиркес теместĕп эпĕ Роза Петровнăна. Çамрăк пулсан та, пурнăç йывăрлăхне курма тивнĕ ăна та. Ĕçне те килĕштерет вăл, пĕлтĕрхи çулччен çакăнтах сĕт йышăнаканта ĕçленĕ, çынсене те пĕлет темелле. Халĕ акă, ĕçленĕ вăхăтрах Чăваш ялхуçалăх институтĕнче вĕренет. Ĕçĕнче тăрăшнине ырламалла çеç. Çак пахалăхсем çумне кăштах та пулин чун ăшши кăна хушинччĕ те вăл...

Протоколсене пăхсан та, ытти енчен тишкерсен те, закона шута илмесĕр, хирĕçлĕ решенисем сахал мар пуррине асăрхатăн. Совхозри профсоюз комитечĕ шухăшне шута илменни те тавлашуллă самантсем нумай каларса тăратать. Каярахпа ăнланчĕ, килĕшрĕ çакăнпа Роза Петровна та. Анчах ӳкĕнӳ те, шухăша кайни те курăнмарĕ ун кусĕнче.

Т. ИЛЬИНА.

Муркаш районĕ.

(ТАСС).

КОМПОЗИТОРСЕН СЪЕЗЧĔ ВĔÇЛЕННĔ

Январĕн 15-мĕшĕнче Мускавра РСФСР композиторĕсен VI съезчĕ вĕçленнĕ. Унта хутшăннисем творчество союзĕн

ле ĕçленине тата унăн малашлăхĕсене сӳтсе явнă, организаци Уставне йышăннă. РСФСР Композиторсен союзĕн ĕçлекен органĕсене суйланă.

Правлени председательне пĕрремĕш хут альтернативлă кандидатсенчен тӳрремĕн суйланă. Вăрттăн сасăласа, творчество союзĕн руководителĕ пулма В. Казенина суйланă. Юлашки виçĕ çул хушшинче вăл СССР культура министрĕн заместителĕ пулса ĕçлет, унччен РСФСР Композиторсен союзĕн правленийĕн председателĕн заместителĕ пулнă. Вăл хор тата камера сочиненийĕсене, театрсенче пыракан спектакльсем, кинофильмсем, çав шутра «Великая Отечественная» киноэпопея валли музыка çырнă.

(ТАСС).

Конкурс

МИЛИЦИ ÇЫННИНЕ ХАЛАЛЛАСА

Чăваш АССР Шалти ĕçсен министерствин политпайне писательсемпе журналистсем, милици сотрудникĕсем йышлăн пухăнна. Политпай начальникĕ Н. Серебров «Милици сотрудникĕ — пирĕн вăхăтри çын» конкурс итогĕсемпе паллаштарнă.

Конкурса 32 автор 116 произведени тăратнă. Вĕсенчен чылайăшне Чăваш кĕнеке издательстви, республикăри журналсемпе хаçатсем пичетлесе кăларнă, радио тата телевидени программисене кĕртнĕ. Жюри решенийĕпе килĕшӳллĕн СССР Писательсен союзĕн членне Н. Оболенцева милици работникĕсен канăçсăр ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырнă повеçсемшĕн пĕррĕмĕш преми панă. Г. Красновпа Н. Максимов прозаиксен, Чăваш АССР халăх писателĕ Н. Терентьев драматург произведенийĕсене — иккĕмĕш преми, В. Долгов прозаик, Ю. Сементер тата А. Аслут поэтсем çырнă произведенисене виççĕмĕш преми парса паллă тунă. Вĕсене лауреат дипломĕпе наградăланă.

Авторсен тепĕр ушкăнне хавхалантармалли преми панă. Милици органĕсен ĕçĕпе пурнăçне тулли çутатма активлă хутшăннăшăн Чăваш АССР Писательсен союзĕн правленийĕн председательне П. Афанасьева, А. Дмитриев, В. Долгов, И. Иванов, Г. Краснов писательсене СССР Шалти ĕçсен министерствин Хисеп грамотипе наградăланă.

Н. АЛЕКСАНДРОВ.

суту-илĕве аталантарассишĕн

ТОКИО. (ТАСС). Кăнтăр Корея Демократиллĕ Корея Халăх Республикипе тӳрремĕнех суту-илӳ тавассине аталантарассишĕн кĕрешет. Çакăн çинчен Кăнтăр Корея правительствин пысăк вырăнта ĕçлекен представителĕ пĕлтерчĕ. Пытармалли çук ĕнтĕ, хальхи вăхăтра икĕ çĕршыв хушшинчи пысăк мар суту-илӳ виççĕмĕш государствасем урлă, уйрăмах илсен, Японипе Гонконг урлă аталанса пырать, тенĕ вăл. Пирĕн шутпа, çак меслете парахăçламалла та икĕ çĕршыв хушшинче ĕçлĕ çыхăнусем йĕркелесе ямалла. Кăнтăр Корея правительстви çакна çынсем пĕр-пĕрикпе çыхăну тытассине аталантармалли çул çинчи паллă тапхăр, экономикăна аталантарма икĕ енĕ те укçа хывмалли лайăх меслет вырăнне хурать.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин валюта сахал пулнине шута илсе, Кăнтăр Корея унăн таварĕсене пысăк хакпа туянма, хăйĕн продукцине ăна чылай йӳнĕрех хакпа сутма хатĕр, тенĕ Кăнтăр Корейăн министрсен кабинечĕн представителĕ. Уйрăм çынсен валюти компанисене эпир суту-илĕри йывăрлăхсене пĕтермешкĕн ятарлă фондран пулăшма хатĕр. Çав фонда эпир Çурçĕрпе Кăнтăр килĕштерсе ĕçлессине йĕркелесе ямашкăн пулăшма туса хунă. Хальхи вăхăтра Кăнтăр Корейăпа КНДР 21,5 миллион долларлăх суту-илӳ тăваççĕ.

сотрудникĕсем наркотикпа мирене кушака тытма, унтан вăра выльăх-чĕрлĕхе сиплекен тухтăрсем патне ăсатма кумай вăй хунă.

Чылай вăхăт хушши сирĕксĕрлесе сыватнă хыççăн Стафи кушак сывалма тытăннă, кăштах самăрлнă та.

ПАП агентстви пĕлтерни

ВАРШАВА, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). ПАП агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Польшăн культурăпа искусство министерствине В. И. Ленинăн Поронинăри музейне хупма сĕнекен çыру пынă. Музей Поронинăра 1947 çултанпа ĕçлет. Унăн экспозицийĕ Ленин 1913—1914 çулсенче Польшăра пулни çинчен каласа парать.

Çыру çине Поронинăри граждансен комитет алă пуснă. Вăл 34 çынран тăрать. Халĕ музей йышăнакан икĕ çуртра ялти культура çуртĕ тата ача садĕ уçма сĕнеççĕ.

Пĕрлехи предприяти пулать

СИНГАПУР, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Икĕ çĕршыв хушшинчи килĕшӳ тăрăх Совет Союзĕпе Сингапурăн пĕрлехи пиллĕкмĕш предприятийĕ пулать. Совет Союзĕн «Электроноргтехника» тулашри суту-илӳ пĕрлешĕвĕпе Сингапурăн «Интрако» государство суту-илӳ компанийĕн пĕрлехи çĕнĕ предприятине «Интэлорг» ят панă. Вăл кăçалхи пĕррĕмĕш кварталтах ĕçлеме пуçлать. Унăн штаб-хваттерĕ Сингапурта пулать. Предприяти ССР Союзне сутмашкăн регионта тата Сингапурта компьютерсем туянмалла. Малашне пĕрлешӳ Совет Союзĕн рынокне валли компьютерсем хăй туса кăларма пуçлать. Совет Союзĕнче çав компьютерсене пăхса тăракан предприятисем пулаççĕ. Компьютерсемшĕн пирĕн çĕршывăн Сингапура, Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азие чĕртавар, нефтехими промышленноçĕпе машиностроени продукчĕсем парса тăмалла пулать.

Хĕрĕх çул иртсен

ДЖАКАРТА. ... Раджа тата унăн çар начальникĕсем тусем çинчен анна. Вĕсем çиччĕ çар çипуçĕ пулнă, çавăн пекех ку ушкăн хĕçсемпе тата сăнасемпе хĕçпăшалланнă. Çĕршывăн юлашки феодал-пуçлăхĕн подданнăйĕсем 40 çул ытла Индонезин Ачех провинцийĕн никам пырса кĕмен вăрманĕсенче пытанса пурăннă. Ку вăл Суматра çурутравĕн çурçĕр пайĕ. Çак кунсенче çеç вĕсем хăйсен ĕмĕрхи вырăнĕсене таврăннă, анчах кунта Индонези тахçанах ĕнтĕ Голланди колонийĕ пулманнине пĕлнĕ.

1948 çулта Раджа çемйи хăйĕн çарĕнчен юлнă салтаксемпе пĕрле пырса кĕме йывăр тусем хушшине чакнă. Вĕсене Голландин экспедици корпусен çарĕсем хĕссе пынă. Тарса пытаннă хыççăн вĕсем тĕнчепе нимĕнле çыхăну та тытман. Индонези никама пăхăнманлăх илнĕ хыççăн та Çурçĕр Суматрăпа кӳршĕллĕ районсенчи администраци представителĕсем çапăçма ялан хатĕр тăракан çак çынсен ялĕсем патне пыман. 1985 çулта çеç пĕррĕмĕш хут çыхăну йĕркелеме май килнĕ.

Çак вăхăталла Ачехри Раджа-феодалăн йăхĕнчи юлашки ăрусем тата унăн ăна пăхăнакансем 850 çынна çитнĕ. Влаçа 53 çулхи çын тытса тăнă. Вăл феодалсен несĕлĕнчен пулнă. Çапах та çакă ăна ыттисемпе пĕрле çĕр çинче ĕçлеме, хăйăккĕшĕк ĕрчетме нимĕн чухлĕ те чăрмантарман.

РУМЫНИ. Декабрь уйăхĕнче Бухарест урамĕсенче боевиксемпе Чаушескуна сыхлакан салтаксем тата пăлхава хутшăннă çынсем хушшинче пулса иртнĕ çапăçусем вăхăтĕнче хулари 500 çемье ытла килсĕр-çуртсăр тăрса юлнă. Тимишоара, Брашов, Сибиу хулисенчи çĕршер çын та çакăн пек лару-тăрăва лекнĕ. Нациe çăлакан фронт совечĕ çынсене хваттерпе, çавăн пекех кĕпе-тумтирпе тата апатçимĕçпе тивĕçтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнать.

Ӳкерчĕк çинче: Румыни салтакĕсем Бухарестри пĕр чиркĕве кĕнĕ çĕрте йĕрке тытса тăраççĕ. Кунта çынсене кĕпе-тумтир салатса параççĕ.

АП—ТАСС телефотоӳкерчĕкĕ.

Критикăпа библиографи

ПАЯНХИ ШАЙРАН ПĂХСА

ЧĂВАШ наука тĕпчев институчĕ юлашки вăхăтра кăларнă «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» тата «Чăваш литератури: поэтикăпа стиль ыйтăвĕсем» статьясен пуххисем ку таранччен тухнисенчен икĕ енпе уйрăлса тăраççĕ. Çак кĕнекесене кĕнĕ статьясене пĕрлештерсе тăракан енсенчен пĕри — вĕсене çĕнетӳ варкăшĕпе хавхаланса çырни, пичетленекен тĕпчевсемпе текстсем уççăнлăх тапхăрĕнче тухни. Курăр-ха, камсен пултарулăхне тĕпченĕ кунта: Г. Комиссаровăнне, А. Миллинне, М. Юманăнне, В. Рсайăнне... Темиçе çул каярах çеç-ха çак ятсене асăнма та шикленнĕ. 30-мĕш çулсенче вăй илнĕ тӳнтер социологсем ку енĕпе сыхă тăнă. Çак кĕнекесем кун çути курни сыхнă критиксен ĕмĕрĕ истори кустăрми айне пулнине, пурнăçăмăра кĕретлĕх кĕрсе пынине кăтартать пулĕ. Çакна «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» кĕнекере пичетленнĕ «Чăваш фольклорĕпе литература вĕрентĕвĕ» статья шăпи лайăх çирĕплетсе парать. 20-мĕш çулсен вĕçĕнчех çырнăскер, вăл нихçан пичетленеймесĕр паянхи куна çитиччен архивра выртнă. Авторне — Г. Комиссарова — тĕрлĕ майпа айăпланă. Çакăнтах пичетленнĕ текстсене (вĕрӳ-суру, кĕлĕ тата пил сăмахĕсене) вара «Чăваш халăх сăмахлăхĕн» 6-мĕш томнех кĕртме хатĕрленĕ пулнă, анчах идеологи сыхчисем тăрăшнипех пичетлеме май килмен.

Кĕнекесен тепĕр ырă енĕ — тĕпчевсемпе юнашар илемлĕ текстсем пичетленни, авторсем текстпа, çыравçă алçырăвĕпе усă курса ĕçлени. Тĕпчевсен вĕçĕнче хушса пани пур. Çакă поэтсен паллах мар хайлавĕсемпе паллашма çеç мар, статья авторĕсен тишкерĕвне тĕрĕсрех хак пама та пулăшать.

«Пытаннă сăнарлăх» статьяра В. Чекушкин чăвашла усăмсăр текстлă тупмалли юмахсене тутарла вуласа пăхать, вĕсене чăваш чĕлхин саккунĕсене пăхăнса йĕркеленине асăрхать. Автор тунă тĕпчев, тишкерӳ мелĕ хăйнеевĕрлĕ. Тĕпчевçĕ ыйту çине çĕнĕлле пăхать, интереслĕ тишкерӳ мелĕ тупнă, çак тĕпчев пĕлтерĕшĕ те пысăк.

КĔНЕКЕН иккĕмĕш пайне Г. Юмарт тĕпчевçĕ чĕлхе, кĕлĕ, пил сăмахĕсене пуçтарса хатĕрленĕ. Кирек хăш халăх та сăмахĕн асамлă хăватне ĕненсе пурăннă. Калăпăр, пĕр-пĕр çын чирлесе ӳксессĕн, чиртен сыватма пĕлекен çынсене (вĕрӳçĕ, юмăç) чĕлхе вĕртернĕ, суртарнă е сӳлти вăйсенчен ырлăх-сывлăх ыйтса, кĕлĕ сăмахĕсем каланă. Тахçан авал чĕлхе тата кĕлĕ сăмахĕсем пĕр-пĕринчен нимĕнпе те уйрăлса тăман, вĕсем çутçанталăкри тĕрлĕ вăйсемпе хутшăннă самантсенче каланасенчен йĕркеленсе кайнă иккен. Чĕлхевçĕсем каланă тăрăх, кĕлĕ тата чĕлхе сăмахĕсем

Кĕнекере пĕтĕмпе 43 чĕлхе (вут, куç, тимĕр, пуççавăру...), 71 кĕлĕ (уй чӳкĕн, çурт хăтланă, çĕр вăрланă чухне каланă...), 5 пил сăмахĕ (туй халăхне, çĕнĕ мăшăра пиллесе каланă сăмахсем). Кашнин хăйĕн историйĕ. Тĕслĕхрен, хĕрт-сурта асăнса каланă кĕлĕсенчен пĕрне А. Егоров 1870 çултах çырса илнĕ. Халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене тĕрлĕ çĕрте — Чăваш çĕршывĕнче, Тутарта, Самар, Чĕмпĕр енче, Ашмарин, Магницкий, Золотницкий тата ытти паллă тĕпчевçĕсемпе сăмахлăха пухса упраса хăварма ăнтăлнă çынсем çыра-çыра илнĕ. Вĕсем тăрăшнипе эпир паян тăван халăхăмăрăн илемлĕ сăмахлăхĕпе паллашма, унăн аталанăвне танлаштарса тĕпчеме пултаратпăр. Чĕлхе, кĕлĕ, пил сăмахĕсем халăхăмăрăн илемлĕ культури, поэзири ăсталăхĕ сĕм авалтан аталанса пынине, пуянланнине ĕнентерсе параççĕ.

Илемлĕ литературăна вульгарлă социологизм кусĕпе пăхса хаклани, писатель пултарулăхне идеологи енне туртни, ăна догмăлла меслет картине хӳтерни литературăмăра чылаях наркăмăшларĕ ĕнтĕ. Çирĕммĕш çулсен вĕçнелле литература социологийĕн вĕрентĕвне, унăн уйрăм ыйтăвĕсене йăнăш аталантарса çутатни писатель пултарулăхне тĕрĕс мар ăнлантарни патне илсе çитерчĕ. Кунта, чи малтанах, марксизм вĕрентĕвĕн литература класлăхĕн ыйтăвне пĕр енлĕн, догмăлла пăхнине палăртса хăвармалла пулĕ. Шăпах çакă çыравçăсене айăпламалли, вĕсен хайлавĕсене халăха хирĕçле тесе хак памалли виçе пулса тăрать.

Октябрь революцийĕ хыççăнах писательсенчен нумайăшĕ шыравра пулнă-ха, литературăмăра çĕнетес, ăна халăха çывăхрах тăвассишĕн тăрăшнă. Писатель пултарулăхĕнчи çĕнĕлĕхе, шырава асăрхаймасăрах, айăпламалли сăлтав туса хураççĕ тӳнтер социологсем. Тăшманла, халăха хирĕçле мĕнле ĕçсем тунă вара пирĕн чăваш писателĕсем: Мĕтри Юман, А. Милли, Г. Комиссаров, Митта Васлейĕ, П. Хусанкай тата ыттисем. Çак ыйтăва татса парас тесен, пирĕн 20—30-мĕш çулсенчи писательсен пултарулăхне тĕплĕнрех тĕпчесе, халиччен пичетленнĕ текстсене алçырусемпе танлаштарса пăхас пулать. Тĕпчев институчĕ кăларнă «Чăваш литератури: поэтикăпа стиль ыйтăвĕсем» статьясен пуххи ку тĕлĕшрен пĕрремĕш утăм тесен те йăнăш пулмĕ.

«ЧĂВАШ литература вĕрентĕвĕн малтанхи утăмĕсем» статья авторĕ — В. Родионов — пире чăваш литературоведенийĕ чи малтан фольклористкăран уйрăлса туратланни çинчен калать. Унта çав наукăна йĕркелеме пулăшнă тĕпчевçĕсем — Г. Комиссаровăн

таранччен те вĕçне çитиччен татса паман ыйтăвĕсенчен пĕри — академиллĕ литература вĕрентĕвĕпе литература критики хушшинчи уйрăмлăхсем çинчен те калаçать.

Паянхи тĕпчевçĕсене 20-мĕш çулсенчи литература уйрăмах хытă интереслентерет, мĕншĕн тесен çĕнетӳ вăл тапхăрти литература çине çĕнĕлле пăхма, ăна объективлă хак пама хистет. Чăваш литературинче тивĕçлĕ хак паман произведенисем, тĕпчесе пĕлмен ыйтусем пайтах. Ю. Яковлев, «20-мĕш çулсенчи чăваш калавĕн хăшпĕр уйрăмлăхĕсем» тата «В Рсайăн пултарулăхĕ» статьясенче И. Тăхтин, Исаев Мĕтрин, Хумма Çеменĕн, çав тапхăрти ытти çыравçăсен пултарулăхне тишкерет, чăваш калавĕнчи натурализм, психологизм, философи, гуманизм уйрăмлăхĕсене палăртать.

К. Кириллов «Айдар» драмăн малтанхи вариантне тĕпчет. П. Осиповăн çак драмине тĕрлĕ вăхăтра тĕпчевçĕсем тĕрлĕрен ăнлантарнă. Пĕрремĕш вариантпа танлаштарсан, халиччен пичетленнĕ вариантсене тĕпрен улăштарса çĕнетнин сăлтавне тĕпчевçĕ 30-мĕш çулсенче литературăри официалла политикăра, социализмла реализмăн принципĕсем литературăна пурнăç çине хăйне кирлĕ пек пăхтарма тăрăшнинче курать. Тĕпчевçĕсем П. Осипов пьесинче «социаллă-класлă содержани», «класс кĕрешĕвĕ» шыратчĕç ку таранччен. Анчах пьесăн пĕрремĕш варианчĕ кун пек пĕтĕмлетӳ тумалли сăлтавсем суккине кăтартса парать, хайлавăн тĕп идейипе унта ӳкерĕннĕ вăхăта пачах урăхла курма май парать.

А. Милли йĕркеленĕ «Чăваш çырăвĕн ушкăнĕ» çинчен вулакансем «Тăван Атăл» журналта вуласа пĕлчĕç пулĕ. Тăван литературăри çакăн пек халиччен пĕлсех кайман ытти пулăмсем, ятсемпе хайлавсем çинчен вуласа пĕлме пулать çак кĕнекере. Статьясен (тĕпчевсен) вĕçĕнче «Устав чувашского литературного общества», «Айтар» драмăн пĕрремĕш варианчĕ (пĕрремĕш хут пичетленет), Юман Мĕтрин «Шевле вылять», «Атăл юрри», «Нарспи» сăввисене хушса панисем пур. Кунсăр пуçне, Г. Юмарт Çеçпĕл юбилейĕ тĕлне пухса хатĕрленĕ, аслă поэтăмăр пултарулăхне кăтартакан ĕçсен кĕске библиографине кĕртнĕ.

НУМАЙ çул хушши паян культурине аталанма май памасăр, ăна хĕссе пурăнни мĕн патне илсе çитернине паян пурте лайăх куратпăр ĕнтĕ. Тинех чăваш чĕлхи те вырăс чĕлхипе танах аталанмалла, пĕр тан правалла пулмалла тетпĕр. Халăх сăмахлăхне те, литературăри манăçа тухнă ятсемпе хайлавсене те вулакан патне çитерес тесе тăрăшмалла паян.

★

Ӳкерчĕк çинче: виçĕ хутчен Олимп чемпионĕ Владислав Третьяк Арменири çĕр чĕтреннĕ вăхăтра тата автоавари лексе суссăрланнă, халĕ Тбилисире пурăнакан Нато Чиковани Канадăран илсе килнĕ çĕнĕ йышши инвалид коляскине парнелет.

О. Булдаков фотоӳкерчĕкĕ.

(ТАСС).

★

ИНКЕК ИРТСЕХ ПĔТНĔ-И?

Иртнĕ çул вĕçĕнче Вăрнарти хими заводĕнче БИ-58 текен наркăмăшлă препарат пăсланса тухнĕ. Вăхăт самаях иртрĕ пулин те, манăçа хăварма иртерех çак пăтăрмаха. Хăрушă инкек патне илсе çитерме пултарнă вăл...

Чăваш АССР çутçанталăка сыхлас енĕпе ĕçлекен Государство комитечĕн председателĕн пĕрремĕш заместителĕ И. И. Николаев кун пирки çапла каласа парать:

— Декабрĕн 16-мĕшĕнче Вăрнарта пурăнакансем сывлăшра ырă мар шăршă пуррине туйса илнĕ. Малтанах вĕсем, поселок çумĕпе иртекен газ пăрăхĕ çурăлса кайман-ши, тесе шутланă. Сăлтавĕ вара урăххинче пулнă: хими заводĕнче БИ-58 концентрат пăсланма тытăннă иккен. Сывлăша фосфамид, ксилол, циклогексалон текен наркăмăшлă газсем тухса тулнă. БИ-58 текен препарата ГДРтан илсе килеççĕ, уппа пĕрчĕллĕ фамидофос тума усă кураççĕ. Ялхуçалăхне сăтăр кӳрекен хурт-кăпшанкăсене пĕтерме кирлĕ вăл.

200 литр кĕрекен пичкесемпе тата 20 литрлă флягăсемпе турттарса тăраççĕ. 25 кубометрлă икĕ савăтра упранă çак препарата заводра. Анчах та упрамалли мĕнпур йĕркесене сĕмсĕррĕн пăсса пынă. Сутă та, хĕвел пайăркисем те ӳкме юрамасть БИ-58 упракан савăтсем çине, кунта вара вĕсем усă вырăнта ларнă. 7 градус сивĕре шăнать çак концентрат. Савăтра ăна хĕлле ăшăтса тăнă. Пĕрре усă курнă пăса пăрăхсемпе илсе пынă савăтсем патне. Çак конденсат температури — 90 градус. Йĕркесĕрлĕхсем тем чухлех ĕçре. Вĕсенчен пĕри — температурăна тĕрĕслесе тăмалли приборсем пулманни.

БИ-58 концентрата 20 градусран ытла ăшăтса яма юрамасть. 60 градуса çитсен концентратра пĕрлешнĕ шĕвексем пĕр-пĕринчен уйрăлма тытăнаççĕ, 90 градусран иртсен вара пăсланнă газсем сывлăшпа пĕрле сирпĕнсе кайма та пултараççĕ. Паллах, Вăрнарта, телее, кун пек инкек пулман. Анчах пĕр савăтĕнчен 0,8 тонна наркăмăшлă газ тухса, тавралăха хупласа хунă. Ăша пăтратнă, сывлăша пӳлнĕ.

— Мĕнле майпа чарса лартма пултарнă-ха аварие?

— Çăмăл пулман. Аварие хирĕç кĕрешме комисси йĕркеленĕ. Гражданла оборона, пушар хуралĕн вăйĕсене чĕнсе илнĕ. Пăс пырса тăракан пăрăхсене сивĕ шыв ярсан кăна савăтри БИ-58 концентрат майĕпен сивĕнме тытăннă. Хăрушлăха сирсе яма пурпĕрех талăк çурă вăхăт иртнĕ.

— Вăрнарта пурăнакансен сывлăхне сиен кӳмен-и авари?

— Районти тĕп больницăран пĕлтернĕ тăрăх, икĕ хĕрарăм наркăмăшлă газпа хăйсене йывăр туйса илнĕ, врачсенчен пулăшу ыйтма пынă. Паллах, инкек ытларах та пулма пултарнă. Вăрнар поселокĕнче пурăнакансене вăйлă çил çăлса хăварнă. Газсене Уйкас Кипек, Енĕш ялĕсем еннелле хăваласа кайнă.

Вăрнар поселокĕн сывлăш атмосферинче наркăмăшлă газсем нормăпа пăхнинчен 80 — 114 хут ытларах капланнă пулнă. Виçĕ талăк хушши сирĕлсе пĕтмен. Çакна каласа хăвармалла: ĕçмелли шывра, юр çинче, пăрта та фосфамид нормăран 4 — 5 хут ытларах пулнă. Çакă вăл çынсен сывлăхне малашне те сиен кӳме пултарĕ.

— Паллах, айăплисен ответ тытма тивет пулĕ...

— Çапла. Авари хăрушсăрлăх йĕркисене сĕмсĕррĕн пăснипе пула сиксе тухнă. Районти прокуратура ку тĕлĕшпе ĕç пуçарнă, следстви авари сăлтавĕсене тĕплĕн тĕпчесе пĕлес енĕпе ĕçлет.

Республикăри çутçанталăка сыхлас енĕпе ĕçлекен Государство комитечĕ 2-мĕш цехра БИ-58 препаратпа хăрушсăрлăх техникине пăсса ĕçлеме чарнă, хими заводĕн çутçанталăка сăтăр кӳнĕшĕн 1 млн. тенкĕ ытларах государствăна тӳлеме тивет.

Çак кунсенче Вăрнар райĕçтăвкомĕн ларăвĕ пулнă. Унта хими заводĕн главнăй инженерне В. И. Варепникова, ПТО начальникне Г. Н. Пархеевăна, хăрушсăрлăх техники енĕпе ĕçлекен пай начальникне А. А. Новичкова малашне хăйсен ĕç вырăнĕнче усă курасси пирки «Агрохим» государство ассоциацийĕ умĕнче ыйту лартнă.

А. ФИЛИППОВ
çырса илнĕ.

«Ветеран» клубра

Етĕрне районĕнчи тĕп библиотека çумĕнче «Ветеран» клуб ĕçлет.

Унăн занятийĕсенче ĕçпе вăрçă ветеранĕсем кулленхи пурнăçри тĕрлĕ темăсене хускатаççĕ, усăллă канаççĕ. Юлашки занятие вĕсем вырăс романсне халал

Спорт — *Спорт*

ТĂХТАВ ХЫÇÇĂНХИ ВĂЙĂСЕМ УМĔН

ПĔЛТЕРӲСЕМ

Чăваш АССР Культура министерстви тата Чăваш государство юрăпа ташă ансамблĕ

Чăваш государство юрăпа ташă ансамблĕн балет артисчĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕллевпе Набережные Челны хулинчи искусствăсен училищин чăваш студине ачасене вĕренме ярасçĕ.

Çак специальноçа вĕренме кăмăллакансене январĕн 21-мĕшĕнче Чăваш государство филармонийĕнче Урицкий урамĕнчи 41-мĕш çуртра 10 сехетре суйласа илеççĕ.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен 7 класĕнче вĕренекенсене çак конкурса хутшăнма чĕнеççĕ.

Училищĕре 4 çул та 10 уйăх вĕренмелле.

Вĕренекенсене общежитие пурăнма вырнаçтараççĕ.

ГРАЖДАНСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

СССР Верховнăй Совечĕн Указĕпе килĕшӳллĕн республикăри Госстрах инспекцийĕсем граждансен хуçалăхĕсенчи обязательнăй йĕркепе страхламалли пурлăха шута илеççĕ.

Страхламалли пурлăх шутне январĕн 1-мĕшĕччен граждансен хуçалăхĕсенче пулнă туса пĕтернĕ çурт-йĕр (вăл шутран коллективлă садсенчи хуралтăсем) **тата килти çак выльăх-чĕрлĕх кĕреççĕ:**

мăйракаллă шултра выльăх — 6 уйăхран иртнисем;

лашасем — 1 çултан иртнисем.

Çурт-йĕр тата выльăх-чĕрлĕх хăйĕн хакĕн 40 процентчĕ чухлĕ страхланă шутланать.

Страховка укçине ялта пурăнакансен ял Советне, хуласенче тата поселоксенче пурăнакансен СССР Сбербанкĕн учрежденийĕсене е Госстрах агенчĕсене тата инспекторĕсене тӳлемелле.

Çавăн пекех страхователь ирĕкĕпе вăл ĕçлекен организаци (предприяти, учреждени) бухгалтерийĕ те страховка укçине ĕç укçинчен тытса юлма пултарать.

Обязательнăй йĕркепе страхланăшăн граждансен страховка укçине октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр тӳлемелле.

Граждансем! Хăвăрăн пурлăха обязательнăй йĕркепе страхланăшăн тӳлемелли укçана вăхăтра парса татăр.

Государство страхованийĕн Чăваш АССРĕнчи управленийĕ.



ШУПАШКАРТИ ТРОЛЛЕЙБУС УПРАВЛЕНИЙĔ

троллейбус водителĕсен курсĕсене вĕренме илет.

Вăтам пĕлӳ илнĕ, 18 çултан аслăрах çамрăксене йышăнаççĕ.

Вĕсене уйăхра 85 тенкĕ стипенди тӳлеççĕ.

6 уйăх вĕренмелле.

Занятисем январĕн 25-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Троллейбус управленийĕн кадрсен пайĕнче çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Энгельса, дом 27, телефон 21-28-91.

«ГАРАНТ» КООПЕРАТИВ

заказчик эскизĕсем тăрăх хăйĕн материалĕшĕн металл хӳмесем, гаражсем тата хресчен хапхисем тума заказсем йышăнать.

Кооператив çавăн пекех, проект - смета документацийĕ

ШУПАШКАРТИ ПРОКАТ КОМБИНАЧĔН ПУЛĂШУСЕН БЮРОВĔ

машинкăпа пичетлеме вĕрентекен тӳлевлĕ курссене март уйăхне йышăнать.

Кĕске вăхăтрах, пĕр-икĕ уйăх хушшинче, эсир машинкăпа хăвăрт та тĕрĕс пичетлеме, çыру ĕçĕн никĕсĕсене вĕренетĕр.

Вĕреннĕшĕн 50 тенкĕ те 40 пус тӳлемелле.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом 24, бюро услуг, телефон 22-28-95.

ПРЕДПРИЯТИСЕМПЕ ОРГАНИЗАЦИСЕН РУКОВОДИТЕЛĔСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА!

«Чувашстрой» ТСОн «Промкомплект» производство пĕрлешĕвĕ предприятисемпе организацисенчен, колхозсемпе совхозсенчен 1990 çулта заказчик материалĕнчен арматура изделийĕсем тата металлоконструкцисем хатĕрлеме заказсем йышăнать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, 34.

тишкерў мелĕ хăйнеевĕрле. Тĕпчевçĕ ыйту çине çĕнĕлле пăхать, интереслĕ тишкерў мелĕ тупнă, çак тĕпчев пĕлтерĕшĕ те пысăк.

КĔНЕКЕН иккĕмĕш пайне Г. Юмарт тĕпчевçĕ чĕлхе, кĕлĕ, пил сăмахĕсене пуçтарса хатĕрленĕ. Кирек хăш халăх та сăмахăн асамлă хăватне ĕненсе пурăннă. Калăпăр, [illegible] сынсене (вĕрсĕ, юмăç) чĕлхе вăйтернĕ, сутарнă е сĕлти вăйсенчен ырлăх-сывлăх ыйтса. Кĕлĕ сăмахĕсем каланă. Тахçан авал чĕлхе тата кĕлĕ сăмахĕсем пĕр-пĕринчен нимĕнпе те уйрăлса тăман, вĕсем çутçанталăкри тĕрлĕ вăйсемпе хутшăннă самантсенче каланисенчен йĕркеленсе кайнă иккен. Чĕлхевçĕсем каланă тăрăх, кĕлĕ тата чĕлхе сăмахĕсем пĕр тымартанах пулса кайнă. Шăпах çак ыйтусене тишкерет, вĕсене жанр, илемлĕх, история енчен пăхса тухать В. Родионов тĕпчевçĕ хăйĕн «Чĕлхе, кĕлĕ тата пил сăмахĕсем» статйинче.

ри Юман, А. Милли, Г. Комиссаров, Митта Ваçлейĕ, П. Хусанкай тата ыттисем. Çак ыйтăва татса парас тесен, пирĕн 20—30-мĕш çулсенчи писательсен пултарулăхне тĕплĕнрех тĕпчесе, халиччен пичетленнĕ текстсене алçырусемпе танлаштарса пăхас пулать. Тĕп-лаштарса [illegible] Тĕпчев институчĕ кăларнă «Чăваш литератури: поэтикăпа стиль [illegible] статйисен пухни [illegible] ку тĕлĕшпе пĕрремĕш утăм тесен те йăнăш пулмĕ.

«ЧĂВАШ литература вĕренӳвĕн малтанхи утăмĕсем» статья авторĕ — В. Родионов — пире чăваш литературоведенийĕ чи малтан фольклористкăран уйрăлса туратланни çинчен калать. Унта çав наукăна йĕркелеме пулăшнă тĕпчевçĕн — Г. Комиссаровăн — ĕçĕсене ыттисенчен тĕплĕнрех пăхса тухнă. Паллах, ку ыйтăва хускатсан, ăна тĕплĕнрех тĕпчес пулсан, Н. В. Никольский, К. П. Прокопьев тата ытти шыравçăсем çинчен каласси кирлĕ. Çакăнпа пĕрлех тĕпчевçĕ литературоведенин ку [illegible] рии «Шевле вылять», «Атăл юрри», «Нарспи» сăввисене хушса панисем пур. Кунсăр пуçне, Г. Юмарт Çеçпĕл юбилейĕ тĕлне пухса хатĕрленĕ, ăслă поэтăмăр пултарулăхне кăтартакан ĕçсен кĕске библиографине кĕртнĕ.

НУМАЙ çул хушши [illegible] культурине аталанма май [illegible]масăр, ăна хĕссе пурăнни мĕн патне илсе çитернине паян пурте лайăх куратпăр ĕнтĕ. Тинех чăваш чĕлхи те вырăс чĕлхипе танах аталанмалла, пĕр тан правалла пулмалла тетпĕр. Халăх сăмахлăхне те, литературăри манăçа тухнă ятсемпе хайлавсене те вулакан патне çитерес тесе тăрăшмалла паян.

Кĕнекесемпе тĕплĕнрех паллашас текенсем вĕсене Чăваш наука тĕпчев институтĕнче туянма пултараççĕ (кĕнеке магазинĕсенче сутлăхра пулмасть), институт почтăпа та ярса парать.

А. ТИМУКОВ.

Сутă та, хĕвел пайăркисем те ӳкме юрамасть БИ-58 упраканă савăтсем сиве, кунта вара вĕсем усă вырăнта ларнă. 7 градус сивĕре шăнать çак концентрат. Сав[illegible] ăна хĕлле ăшăтса тĕнĕ. Пĕрре усă курнă пăса пăрахсемпе илсе пынă савăтсем патне. Çак концентрат температури — 90 гра-

[illegible] пурăнакансен сывлăхне сиен кӳмест-и вара?

— Районти тĕп больницăран пĕлтернĕ тăрăх, икĕ хĕрарăм наркăмăшлă газпа хăйсене йывăр туйса илнĕ, врачсенчен пулăшу ыйтма пынă. Паллах, иккĕ ытларах та пулма пултарнă. Вăрнар поселокĕнче пурăнакансене вăй-

перне В. И. Варенчикова, ЦТО начальникне Г. Н. Пархеева, хăрушсăрлăх техники енĕпе ĕçлекен пай начальникне А. А. Новичкова малашне хăйсен ĕç вырăнĕнче усă курасси пирки «Агрохим» госассоциацийĕ умĕнче ыйту лартнă.

А. ФИЛИППОВ
сырса илнĕ.

«Ветеран» клубра

Етĕрне районĕнчи тĕп библиотека çумĕнче «Ветеран» клуб ĕçлет.

Унăн занятийĕсенче ĕçпе вăрçă ветеранĕсем кулленхи пурнăçри тĕрлĕ темăсене хускатаççĕ, усăллă канаççĕ. Юлашки занятие вĕсем вырăс романсне халалланă. Тĕп библиотека директорĕн заместителĕ Н. Долгова музыкăра романс жанрĕ мĕнле пуçланса кайни, вăл пирĕн çĕршывра мĕнле аталанни çинчен каласа кăтартнă.

Г. МЫТИКОВ.

Госстрах сĕнет

ÇĔНĔ ЙĔРКЕПЕ

Государство страхованийĕн ĕçĕнче çĕнĕ тариф ставкисемпе усă курма тытăннă, теççĕ. Çакăн çинчен хаçатра ăнлантарса парайăр-ши!

(Редакцие килнĕ çыруран).

Уйрăм çынсене страхламалли условисене тата договор тăвакансен ыйтăвĕсене тивĕçтерессине лайăхлатас, страховани суммине тӳлессине хăвăртлатас тĕллевпе, 1989 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнче пуçласа, вĕсене тӳлемелли йĕркене улăштарнă. Халĕ Госстрах органĕсен сусăрланнине вăл е ку орган аманнине кура мар, сиплевпе профилактика учрежденийĕсем панă справка тăрăх çирĕплетеççĕ. Çавăнпа пĕрлех страховани суммине тӳлес ыйтăва татса панă чухне ытларах çăмăллăхсем парăртнă, страховани суммине ӳстернĕ. Сусăрланнишĕн тата ытти сăлтавсемпе тӳлеме кирлĕ документсене ансатлатнă.

Страховани договорĕсем енĕпе Госстрах органĕсен ответлăхне пысăклатни страховани суммин калăпăшне ӳстерме май панă. Тĕслĕхрен, пĕлтĕр, 1988 çулпа танлаштарсан, çав сумма 2 хута яхăн ытларах пулнă.

Страховани йĕркипе тӳлемелли перечене 1986 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче çирĕплетнĕ, инкек-синкекрен уйрăммăн страхламалли тарифсемпе пăхман травмăсене те кĕртнĕ. Çавна пула страховани суммине те малтанхинчен ытларах тӳлеме тивет. Страховани валли укçа-тенкĕ фончĕ çителĕклĕ пултăр тесе, çĕнĕ тариф ставкисем хатĕрленĕ: 100 тенкĕлĕх страховани суммишĕн — 25, 40, 70 пус, 1 тенкĕ те 20 пус, 2 тенкĕ.

Ĕçлемен пенсионерсемпе тата II, III группăри инвалидсемпе инкек-синкек пуласран договорсем тунă чухне 25 пус ставкăпа усă кураççĕ. Вĕренекенсемпе, студентсемпе, килте ларакан хĕрарăмсемпе, служащисемпе, инженерсемпе, техника работникĕсемпе тата сусăрланас хăрушлăх сахалрах çĕрте, производствăпа тӳрремĕнех çыхăнман ĕçре ĕçлекен ытти граждансемпе 100 тенкĕлĕх страховани суммишĕн 40 пус ставка çирĕплетнĕ.

Инкек-синкек пулас хăрушлăх уйрăмах пысăк, сиенлĕ тата хăрушă ĕç условийĕсемпе çыхăннă çынсемпе (крановщиксемпе, стропальщиксемпе, монтажниксемпе тата ытти те), унччĕнхи пекех, 1 тенкĕ те 20 пус ставкăпа усă кураççĕ.

70 пус ставка вара — производство процесĕнче, ялхуçалăхĕнче ĕçлекен, транспорт хатĕрĕсене тытса пыракан граждансемпе çар çыннисем валли. Унччен вĕсен тарифĕ 50 тата 80 пус пулнă.

Уйрăм спортсменсемпе (кĕрешекенсемпе, акробатсемпе, штангистсемпе тата ытти те) договор тунă чухне 100 тенкелĕх страховани суммишĕн 2 тенкĕ ставкăпа усă кураççĕ.

Çĕнĕ тариф ставкисем 1989 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнче вăя кĕнĕ.

И. МИХАЙЛОВ,
Чăваш АССР Госстрах управленийĕн начальникĕн заместителĕ.

Спорт *Спорт*

ТĂХТАВ ХЫÇÇĂНХИ ВĂЙĂСЕМ УМĔН

СССР чемпионачĕн иккĕмĕш лигин хĕвеланăç зонинче ăмăртакан командăсен виçĕ эрнене яхăн тăхтав пулчĕ. Январĕн 17-мĕшĕнче коллективсем каллех пăр площадкисене тухаççĕ. Çак вăйăсем умĕн командăсем турнир таблицинче çапла вырнаçса тухнă:

	В.	С.	Н.с.	В.я.	О
Кренгольм	36	25	4	7	54
Корд	40	23	8	9	54
Сокол	40	20	9	11	49
Олимпия	40	21	7	12	49
Станкостроитель	40	23	2	15	48
Трактор	38	22	3	13	47
Кварц	40	19	9	12	47
Дизелист	40	19	5	16	43
ШВСМ (Киев)	38	17	7	14	41
СКА-2	40	13	10	17	36
Спартак	40	12	10	18	34
Десна	36	15	3	18	33
ШВСМ (Яросл.)	40	14	5	21	33
Динамо-2	38	11	10	17	32
Химик	42	13	6	23	32
РШСВМ «Энерго»	40	11	9	20	31
Прогресс	40	12	4	24	26
Таллэкс	40	7	3	30	17

Таблицăран курăнать ĕнтĕ, иртнĕ çулхи вăйăсене Çĕнĕ Шупашкарти «Сокол» ăнăçлă иртерчĕ, декабрьти матчсене лайăх выляса, виççĕмĕш вырăна тухма пултарчĕ. Унăн тапăнса выляканĕсем 159 шайба çапса кĕртнĕ.

«Соколăн» хальхи тĕп задачи — халиччен тунă çитĕнĕве малашнехи вăйăсенче кăтартусемпе çирĕплетесси. Анчах, тӳрех калăпăр, ку задачăна пурнăçа кĕртме ăна çăмăл мар. Кăçалхи пĕрремĕш вăйăсене унăн хăнара иртерме тивет.

* * *

Çĕнĕ Шупашкарти «Сокол» спортклубĕн 1973 çулта çуралнă çамрăк хоккеистсен командă РСФСРта мала тухассишĕн иртерекен зонăри турнирăн черетлĕ турĕнче Киров-Чепецкра «Олимпия» командăпа вылянă. Шел ĕнтĕ, халиччен ăнăçлă вылянă пирĕн хоккеистсем ку хутĕнче икĕ матчĕнче те выляса янă — 3:7, 3:7. Çак вăйăсем хыççăн «Соколăн» 21 очко. Вăл пурпĕрех зонăри лидерсен шутĕнче.

* * *

Республика кубокне çĕнсе илессишĕн ачасен командисен ăмăртăвне иртернĕ. Турнира вуникĕ команда хутшăннă. Финалта Çĕнĕ Шупашкарти «Соколпа» Шупашкарти «Волга» тĕл пулнă. «Сокол» 9:0 шутпа çĕнтернĕ, кубок — унăн аллинче. Виççĕмĕш вырăнта — «Энергия».

В. КРЫСИН.

Редактор А. П. КАЗАНОВ.

тан аслăрах çамрăксене йышăнаççĕ.

Вĕсене уйăхра 85 тенкĕ стипенди тӳлеççĕ.

6 уйăх вĕренмелле.

Занятисем январĕн 25-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Троллейбус управленийĕн кадрсен пайĕнче çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Энгельса, дом 27, телефон 21-28-91.

Вĕреннĕшĕн 50 тенкĕ те 40 пус тӳлемелле.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом 24, бюро услуг, телефон 22-28-95.

«ГАРАНТ» КООПЕРАТИВ

заказчик эскизĕсем тăрăх хăйĕн материалĕнчен металл хӳмесем, гаражсем тата хресчен хапхисем тума заказсем йышăнать.

Кооператив çавăн пекех, проект-смета документацийĕ туса хатĕрлесе, çуртсемпе сооруженисем тума, вĕсене юсама договорсем çырса çирĕплетет.

«Гарант» кооператива çак адреспа пымалла: г. Чебоксары, ул. Чапаева, дом 14, кв. 2.

Телефонсем: 21-10-12, 20-43-61.

ДОБРЯНКА ХУЛИНЧИ ЮСАВ-МЕХАНИКА ЗАВОЧĔ

мĕнпур предприятисенчен «ЗИЛ-131» тата «ЗИЛ-157» автомобильсене, вĕсен агрегачĕсене тĕпрен юсама йышăнать.

Пирĕн адрес: 618710, г. Добрянка Пермской области, ул. Красногвардейская, 50.

ШУПАШКАРТИ ПРОКАТ КОМБИНАЧĔН ПУЛĂШУСЕН БЮРОВĔ

икĕ çĕрте ĕçлесе траур чечекĕсем хатĕрлекенсене, вилĕ çынна пытармалли хатĕрсем ĕçлекенсене, килти сĕвĕ машинисене юсама тата йĕркере тытса тăма вĕрентекен курссене преподавательсене чĕнет.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом 24, бюро услуг, телефон 22-28-95.

ПРЕДПРИЯТИСЕМПЕ ОРГАНИЗАЦИСЕН РУКОВОДИТЕЛĔСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА!

«Чувашстрой» ТСО «Промкомплект» производство пĕрлешĕвĕ предприятисемпе организацисенчен, колхозсемпе совхозсенчен 1990 çулта заказчик материалĕнчен арматура изделийĕсем тата металлоконструкцисем хатĕрлеме заказсем йышăнать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, 34.

Телефонсем: 22-07-55 22-25-18.

ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧИ ЮСАВ-ТЕХНИКА ПРЕДПРИЯТИЙĔ

предприятисемпе организацисенчен, колхозсемпе совхозсенчен, уйрăм граждансенчен хăйĕн тата заказчик материалĕнчен металлоизделисем хатĕрлеме заказсем йышăнать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: пос. Кугеси, ул. Механизаторов, 13, тел. 2-18-75.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ГЕОЛОГИ РАЗВЕДКИН ПАРТИЙĔ

сад коллективĕсенчен шыв скважинисем пăралама тата вĕсене юсама заявкăсем йышăнать. Заказчиксенчен пăрăхсем, фильтрсем тата проектсем ыйтмаççĕ. Заявкăсене договор тунă хыççăн 1—3 уйăхран пурнăçлаççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: пос. Кугеси, ул. Калинина, дом 10.

Телефонсем: 2-24-84, 2-22-76.

ÇАНТАЛĂК

Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх, паян кăнтăрла пирĕн республикăра пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, кăштах юр çăвать, лăпкă тăман вĕçтерет. Çил кăнтăртан çеккунтра 7—12 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури республикăра 5—10, Шупашкарта 6—8 градус сивĕ пулать.

Паян кун тăршшĕ 7 сехет те 41 минут. Хĕвел 16 сехет те 31 минутра анать.

ТЕЛЕВИДЕНИ

ЮНКУН.
ЯНВАРЕН 17-МĔШĔ
ПĔРРЕМĔШ ПРОГРАММА

6.30 — 120 минут.
8.35 — «Дубровский». 4 серилле илемлĕ телефильм. 2 тата 3 серисем.
10.45 — Çĕр синчи ачасем мĕн çинчен юрлаççĕ.
11.45 — Мультфильм.
11.55 — Халăх творчествин «Радуга» телепрограммисен Пĕтĕм тĕнчери VIII фестивалĕ. (Швейцари).
12.30 — Вăхăт.
15.30 — «Арена чудес». Цирк.
16.20 — Документлă телефильмсем.
16.50 — Телеочерк.
17.25 — Ача - пăча сехечĕ (акăлчанла).
18.25 — Коллаж.
18.30 — Вăхăт.
19.00 — Прогресс. Информаци. Реклама.
19.30 — Мультфильм.
19.50 — «Дубровский». Тăватă серилле илемлĕ телефильм. 2 сери.
21.00 — Вăхăт.
21.30 — Çивĕч ыйтупа илнĕ интервью.
21.40 — «Сын тата закон». Право пĕлĕвĕсем паракан видеоканал.
22.50 — «Холода, холода». Эстрада программи.
23.15 — Пирĕн парăмсем. 2-мĕш передача — «Дорога к Палеху».
23.45 — ТСН.

ИККĔМĔШ ПРОГРАММА

8.00 — Ирхи гимнастика.
8.15 — Наукăллă - популярлă фильм.
8.35 — 11.05 — Вĕренӳ передачисем.
11.05 — Наукăллă - популярлă фильм.
11.35 — Вĕренӳ передачи.
12.05 — «Старый новый год». Илемлĕ телефильм, 2 сери.
13.10 — Документлă фильм.
13.30 — «Благочестивая Марта». 2 сери.
14.40 — «Спасти и сохранить». Фильм-концерт.
17.45 — Республика кунĕ (Шуп.).
17.55 — Пултарулăх сулĕ. «Ячĕсем манăсман». (Шуп.).
18.30 — Вăхăт (сурдокуçарупа).
19.00 — «Ан ватăл, ялăм» (Шуп.).
19.35 — Республика кунĕ (Шуп.).
19.45 — Г. Свиридов романсĕсене РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ П. Заломнов юрлать (Шуп.).
20.10 — Ырă кас пултăр, ачасем!
20.25 — Баскетбол. Р. Корач кубокĕ. Арçынсем. «Босна» (Югослави) — ЦСКА. Югославирен.
21.00 — Концерт.
21.10 — Документлă телефильм.
21.30 — «Моя жизнь». Илемлĕ телефильм. 1 сери.
22.35 — Телевиденин музыка абонеменчĕ. 3-мĕш передача. Ленинград капелли.

РАДИО

ЮНКУН.
ЯНВАРЕН 17-МĔШĔ

6.15 — «Столица курьерĕ». Шупашкар çыннисем валли. 6.30 — «Позици». Информаципе публицистика программи. Кăларăмра — Чăваш АССР халăх депутачĕн кандидачĕпе, ЧГУ преподавателĕпе В. Д. Дачиловпа иртернĕ калаçу. 7.00 — 7.15 — Мускав передачисем. 7.15 — Республика хаçачĕсене пăхса тухни. 7.25 — 7.30 — Пĕлтерӳсем. 16.30 — 17.30 — «Ритмы планеты» (стерео). 18.00 — Çĕнĕ хыпарсем. 18.12 — 1989 çулхи юрăсем. 18.30 — Республика хыпарĕсем. 18.40 — 19.45 — Мускав передачисем. 19.45 — 20.45 — Çамрăксем валли «Араскал».

ТЕАТР

К. В. ИВАНОВ ЯЧĔПЕ ХИСЕПЛЕНЕКЕН ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ДРАМА ТЕАТРĔ — январĕн 17-мĕшĕнче «Касар мана» драма премьери, январĕн 18-мĕшĕнче «Саламби» пьеса.

РЕСПУБЛИКĂРИ ВЫРĂС ДРАМА ТЕАТРĔ — январĕн 17-мĕшĕнче «Черная роза — эмблема печали, красная роза — эмблема любви...» сочинени, январĕн 18-мĕшĕнче «Женский стол в «Охотничьем зале».

ЧĂВАШ ÇАМРĂКĔСЕН ТЕАТРĔ — январĕн 21-мĕшĕнче «Таркăн» мыскараллă инкек премьери, январĕн 22-мĕшĕнче «Юратма пĕлекенсем телейлĕ» лирикăллă драма премьери.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО МУЗЫКА ТЕАТРĔ — январĕн 18-мĕшĕнче «Трубадур» опера, январĕн 19-мĕшĕнче «Порги и Бесс» балет.

Каçхи спектакльсем 19 сехетре пуçланаççĕ.

КИНО

«СЕСПЕЛЬ» — Кăвак зал: «Однажды в Америке» — 9.00, 15.00, 19.00; «Смиренное кладбище» — 13.00. Кĕрен зал: «Месть и закон» — 9.00, 12.00, 15.00, 20.10; «Дайте мужа Анне Заккео» («Утраченные грезы») — 18.00. Кинозал: «Приключения Квентина Дорварда, стрелка королевской гвардии» — 15.45, 18.00, 20.00.

«ОКТЯБРЬ» — сборник мультфильмов — 9.00; «Однажды в Америке» — 10.15, 14.20, 18.40.

«ПОБЕДА» — Пысăк зал: «Брак с выходными днями» — 9.00, 11.00, 13.00, 15.00, 17.00, 19.00, 21.00. Вăтам зал: «Полет навигатора» — 10.30, 12.30, 14.30, 16.30, 18.30, 20.30. Пĕчĕк зал: «Полет навигатора» — 10.00, 14.00, 16.00; «Жизнь по лимиту» — 18.00; «Игла» — 12.00, 20.00.

«МИР» — «Полет навигатора» — 10.30, 14.00, 18.30; «На помощь, братцы!» — 9.00; «Женина династия» — 12.15, 16.00, 20.30.

«СОКОЛ» — «Наваждение» — 10.30, 12.30, 14.30, 16.20, 18.15, 20.00.

«ЛУЧ» — «Смех и горе у Бела моря» — 14.00; «Проводник» — 16.00, 18.00, 20.00.

«ЮНОСТЬ» — «Однажды в Америке» — 17.30.

«САЛЮТ» КУЛЬТУРА КЕРМЕНĔ — Убегающий август» — 18.00, 20.00.

ПИРĔН АДРЕС:
428019, г. ЧЕБОКСАРЫ,
пр. ИВАНА ЯКОВЛЕВА, 13.
ДОМ ПЕЧАТИ, III ЭТАЖ.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор — 21-00-67; редактор заместителĕсем — 21-04-17 тата 21-20-07; ответлă секретарь — 21-04-26; секретариат — 25-13-01; парти пурнăç пайĕ — 21-08-61 тата 25-13-24; идеологи пайĕ — 21-03-54 тата 25-13-18; промышленность, строительство тата транспорт пайĕ — 21-33-64, 25-13-04 тата 25-13-81; агропромышленность пайĕ — 21-08-62, 25-13-10, 25-13-05 тата 25-13-58; советсен ĕçĕпе социаллă пурнăç пайĕ — 21-03-04 тата 25-13-06; культура пайĕ — 21-08-56 тата 25-13-02; çырусемпе обществăлла корреспондентсен пайĕ — 21-05-21, 25-13-07 тата 29-76-22; информаципе спорт пайĕ — 21-22-31 тата 25-13-09; фотокорреспондент — 21-45-94; хамăр корреспондентсем — 3-24-91 (Канаш), 2-10-54 (Елчĕк), 4-34 (Етĕрне) тата 2-26-30 (Сĕнтĕрвăрри); издательство директорĕ — 21-00-23; пĕлтерӳсен пайĕ — 21-14-89 тата 29-76-89; «Вестник недели» редакцийĕ — 21-04-39; бухгалтери — 21-45-86; Чăваш АССР Журналистсен союзĕн правленийĕ — 25-13-83; хаçатăн обществăлла приемнăйĕ — 21-22-94.

Хаçат тунтикунсăр пуçне кулленех тухать.

НТ 33013. Индекс газеты — 54600. Типография издательства Чувашского обкома КПСС, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13. Высокая печать, объем 2 печ. листа. Тираж 72.000 экз. Заказ № 230.